ХЫПАР

КĂРЛАЧ
1 № 2014

# САМАНТ




## Ирина Диарова: «Раççей конкурсĕ – тĕлĕнмелле ăшă та тарават уяв!»

# Тантăшăрсене 2014 çулта мĕн сунасшăн эсир?

– ыйтрăмăр эпир Вăрнар районĕнчи Калинино шкулĕнче









**Ольга Ластухина:**

– 2014 çул – Лаша çулĕ. Эпĕ сире, хисеплĕ тус-тантăшăмсем, Çĕнĕ çул ячĕпе саламлатăп. Çак çулта урхамах пек вăйлă, чăтăмлă, çивĕч пулăр. Çамрăксене юрату, пурне те ăнăçу тата телей сунатăп. Пурнăçра чи кирли – сывлăх, çавăнпа пурне те спортпа туслашма сĕнетĕп. Спортпа туслă тăк – илемлĕ пулатăр, çакă вара хăвăра та, ыттисене те кăмăллă. Вĕренÿре те тăрăшуллă пулăр, «пиллĕк» паллăсем кăна мар, хушăран «тăваттă» илнĕшĕн те нимĕн те каламастăп. Аçу-аннÿ не итлĕр, вĕсем сире чунтан юратнăран кăштах ятласа та илеççĕ пулĕ. Алран кĕнеке ан ярăр. Вулакан çын – тăнлă çын. Ун пек этемпе калаçма та кăсăклă (каччăсем, асра тытăр). Пурнăçра тĕслĕх илмелли çын пирĕншĕн – шкул директорĕ Татьяна Павловна Ефимова. Пур вăй-халне вăл шкула аталантарма хурать. Пирĕн кадетсен, пограничниксен, космонавтсен, моряксен класĕсем пур. 2012 çулта кадетсен класĕ Мускаври ăмăртура 1-мĕш вырăна тивĕçрĕ. Тантăшсем, килсе курăр пирĕн тăрăха!

**Алексей Войнов:**

– Çулталăк пуçламăшĕнче тĕнчипе пĕлтерĕшлĕ хула – Сочи. Чи пултаруллă спортсменсем вăй виçме Раççейре пуçтарăнни кăвак лаша çулне уйрăмах пĕлтерĕшлĕ тăвать. Сочири Хĕллехи Олимпиадăра Раççей спортсменĕсене пысăк ăнăçусем сунатăп. Пире, спорт юратуçисене, рекордсемпе савăнтарасса шанатăп. 2014 çулта пурне те уçлăх лаши пек вăр-вар та маттур пулма сунатăп. Çамрăклăх вĕренÿпе мал утăмлă. Пĕлĕве сумкара йăтса ан çÿрĕр, унпа пĕлсе те тухăçлă усă курма пĕлĕр. Вун пĕрмĕш класра вĕреннĕ май, çакна та калам: ăслă, çирĕп, спортпа туслă çамрăксене аслă шкулсенче хапăлласах кĕтеççĕ. Çавăнпа тантăшсене пур енĕпе те хастар пулма, вĕренÿре чуна парса тăрăшма чĕнетĕп. Калинино шкулне Шĕнер Ишекĕнчен çÿретĕп эпĕ. Пирĕн ял çутă та илемлĕ. Кашни чăваш çамрăкне хамăр яла пырса куртарас килет. Ăнланмалла, ку ĕмĕт кăна, çапах та кăçалхи çул Калининона – Нурăса çитсе курăрах. Республика тăрăх çул çÿреме тăрăшăр!

**Зинаида Яшнова:**

– Кивĕ çул ăнăçлă иртрĕ, телейлĕ, асра юлмалли самантсемпе тулăх пулчĕ. Вăхăт шунăçемĕн вĕсем хитреленсе çеç пыраççĕ. «Самант» тусĕсен те çулталăк япăх килмерĕ пуль: тен, хăшĕ çĕнĕ туссем тупрĕ, теприсем унченхи пĕлĕшĕсене лайăхрах пĕлсе çитрĕç, юратупа тĕл пулнисем те тупăнчĕçех ĕнтĕ. Çамрăксене хастар, кăмăлпа çирĕп пулма сунатăп – вара ĕмĕтленни пурнăçланатех. Çут тĕнчене уçлăхри кăвак урхамах илтерсе çитрĕ. Апла пулсан чи хăюллă шухăшсемпе ĕмĕтсен вăхăчĕ тытăнать. Ан хăрăр вĕсене пурнăçа кĕртме, тĕллевсем патне юмахри юлан утçă пек ыткăнăр. Пуриншĕн те телей çулталăкĕ пултăр 2014 çул. Тантăшсене кĕске сăвăпах саламлас!

Çак çулта эпир сунатпăр
Телей, сывлăх та илем,
Пĕтĕм ĕмĕт пурнăçлантăр,
Юратусăр та – кичем.
Савнă тус, пулсам эс хÿхĕм,
Аслисене сума су,
Мал сукмак, тен, йывăр килĕ –
Утăм хыççăн утăм ту!

**Денис Волков:**

– Çĕнĕ çул ячĕпе пурне те саламлатăп, 2014 çул лайăхрах та илемлĕрех пуласса шанатăп. Килес çул сирĕншĕн асамлă пултăр тесе сунатăп. Вăрнар районĕ – Чăваш Енĕн варри, апла кунта пурнăçпа хавхаллă çынсем пурнаççĕ, çут çанталăк та уйрăмрах. Пирĕн тăрăх пуянлăхĕ – çамрăксем. Вĕсем Çĕнĕ çула савăнса та хавхаланса кĕтсе илчĕç. Килес çул мĕн тумаллине палăртрĕç. Тĕллевĕсем патне çултан пăрăнмасăр утасси пирки иккĕленместĕп. Республикăн ытти тăрăхĕнче те çамрăксем хастар пулччăр, спортпа туслашччăр, сывлăхĕпе савăнтарччăр. Чăваш яшĕ те хĕрĕ яланах пĕр-пĕрне ăнланасса ĕненетĕп. Пирĕн шкула ачасем 21 ялтан çÿреççĕ. Республикăра вара – 21 район. Чăваш тĕнчине моделлекен хутлăхра пурăнатпăр тесех калас килет хамăр пирки. Апла пулсан, яваплăх та пысăк пирĕн. Тантăшсене пĕлтерер: Калинино шкулĕнче вĕренекенсем туслă та мал ĕмĕтлĕ. Ытти район ачисем те çавах, вĕсем те маттур. Чăваш çамрăкĕсем, пуласлăха пĕрле утар!

**Владимир СТЕПАНОВ интересленнĕ**

# Сиккипе сиктерсе çут тĕнчене УРХАМАХ çитрĕ

Тухăç гороскопĕпе килĕшӳллĕн, çăлтăр ункин çаврăмĕнче Лаша çулталăкĕ черетленчĕ. Уçлăх урхамахĕ – кăвак, çитменнине йывăç! Вăл вăр-вар та тĕллевлĕ, ăслă-тăнлă та шанчăклă. Лаша – лашах: çăлтăр палли çынсене 2014 çулта ырă улшăнусем çеç шантарать. Ырлăшсем вара татăклă та, пĕр кĕтмен çĕртен те пулĕç. Уçлăх урхамахĕн ытарĕнче çуралнă чаплă çынсен кăшăлĕ те сумлă. Владимир Ленин, Никита Хрущев, Леонид Брежнев, Александр Куприн, Иван Бунин, Исаак Ньютон, Петр Капица, Фредерик Шопен, Рембрандт, Антонио Вивальди, Роберт Вагнер – çаксем пурте уçлăх лашисем. Чăваш халăхĕн юратнă артист-хурахĕсем Шон Коннери, Кевин Костнер, Клинт Иствуд, Гаррисон Форд, Джон Траволта та юлан утçăсем. Майк Тайсон – боксер тата веган, Малик Абдул Азиз ятпа ислам йышăннăскер, вăл та лаша çулĕнче çуралнă. Мĕн тĕнче хĕррине çӳресси? Хăй вăхăтĕнче пирĕн журнал та «Çилçунат» – «Çунатлă урхамах» – ятпа тухса тăнă!

# «САМАНТ» ТУСĔСЕН ĂНĂÇĂВĔ-ТЕЛЕЙĔ 2014 ÇУЛТА СИККИПЕ КĂНА МАР, ÇИЛ ÇУНАТЛАХ ВĔÇТĔР!!!

Пакистанри Пенджаб провинцийĕнче Джалалпур хули пур. Унăн историйĕ питĕ чаплă. Пирĕн тапхăрчченхи 326 çулта ăна Аслă Александр-Искентер – Македонин çар пуçĕ-патши никĕсленĕ. Çак хулан малтанхи ячĕ – Буцефал(а). Этемлĕх историне кĕрсе юлнă урхамах, Александрăн чи шанчăклă тăвата ураллă тусĕ Инди походĕнче вилсен, тĕнчене çĕнсе илнĕ Искентер патша юратнă урхамахне тирпейлесе пытарнă та ăна чысласа хула никĕсленĕ, ун ятне панă.



Тĕнче культуринче лаша сăнарĕ анлă, ут-этем хутăшĕсем – кентаврсем мĕне тăраççĕ. Чи ватă лаша-турăсенчен пĕри – Анамелех, хура усалтăш. Авалхи Ассирире ăна лаша сăнарлĕ курнă, ăна «чысласа» çынсемпе чӳкленĕ, пĕчĕк ачасене те çунтарса янă пулать.

Чи çамрăк лаша-турă кунçулĕ вара паллă, вăл мĕнле «çурални» те вăрттăнлăх мар. Ячĕ унăн – Цимин Чак, вăл индейсен турри. Цимин Чак ут-турă тĕнчипе паллă Эрнан Кортеспа çыхăннă. Мексикăна парăнтарнă испан ертӳçин лаши пĕррехинче урине амантнă. Уксахлакан утне конкистаçă Тайясала хули пуçлăхне шанса парса хăварать. Лешĕ урхамаха патшана пăхнă пек пăхатăп тесе тупа тăвать. Ацтексем, Эрнан Кортеса çунатлă çĕлентурă Кетцалькоатль элчи тесе йышăнаканскерсем, сусăрланнă лашана витене мар, çурт-турăша хупнă. Кетцалькоатль умĕнче çылăха кĕрес мар тесе çурт-турăша ырă шăршăллă чечексемпе хупланă, урхамаха вара сĕтеклĕ какайпа сăйланă! Индейсем хăрушла тăрăшни пур пĕр харама кайнă – Кортес лаши выçăпа вилнĕ. Тайясала хулин пуçлăхĕ, вилнĕ лашапа пĕрле юнашар тăсăлса ӳкме хатĕрскер, чултан урхамах кĕлеткине касса кăларма хушнă. Чул палăка Цимин Чак ят панă (Аслатиллĕ Тапир тесе куçать). Вилнĕ лаша хăйсене каçартăр тесе индейсем чул палăка пуç çапма тытăннă. Ним кулăшли те çук кунта: Мексикăра вырăн-тăрăхпа паян кунччен Цимин Чака пуç çапасси упранса юлнă.

Тăван культурăра лаша – питĕ сумлă та тарăн сăнар, унăн хавхалăхĕ чăваш тĕнчине халĕ те витĕр çупăрласа тăрать. Вырăс чĕлхине те улшăнмасăрах кĕнĕ унăн ячĕ: лаша – лошадь. Пирĕн несĕлсем урхамаха çынсене турăсем парнеленĕ тесе ĕненнĕ. Турă янаварĕ пулнă май, лаша хăвачĕ чикесĕр тесе йышăннă: вăл тĕнчери нимĕнле усалтан та хăрамасть, пурăнăçпа вилĕм чикки урлă та каçса çӳреет. Вилĕм те хăратаймасть ăна! Шурă ут вара уйрăмах сăваплă шутланнă. Хавхаллă несĕлсем тĕнче касса çӳренĕ чух вĕсен çар ушкăнĕнче яланах шурă урхамах пынă. Ăна ятарласа Çӳлти (Çӳлти Атте) валли уйăрнă. Несĕлсем Тĕп Азирен кайсан çеçен хире монголсен йăхĕсем йышăннă. Вĕсем те çак йăлана упраса хăварнă. Монголсем несĕлсен туррин ятне те улăштарман – Çӳлти тесе чĕннĕ (вырăсла Сульде тесе çыраççĕ).

Çакна та калар. Наукăна эпир ĕненетпĕр, вăл мĕн çирĕплетнине шанатпăр. Çавăнпа лаша-ашак йăхĕ пĕчĕккиç – кушак пысăкăш кăна – эогиппусран пуçланса кайнă тенипе килĕшетпĕр.

Чăннипе вара, лаша çав авалхи чунтамăшран пулса кайнă тени тĕшмĕртӳ çеç. Лашасен мăн аслашшĕне эпир халĕ те пĕлместпĕр. Килти лашан аслашшĕ вара паллă – тарпан.

# Вĕреннин, аталаннин чикки çук

Пултаруллă хĕрсене пĕр вырăнта лартаймăн. Темĕн те пĕлесшĕн, темĕн те тĕпчесшĕн. Çĕр чăмăрĕ те тăвăр вĕсемшĕн. Çак хушăрах Чăваш Республикине те тĕнче уçлăхĕ таранах пысăклатма пултараççĕ. Вăй-хăват вĕресе тăрать вĕсен.

Çакнашкал вут-хĕмлĕн çунса тăракан пикесенчен пĕри – И.Н.Ульянов ячĕллĕ патшалăх университетĕнче журналистика уйрăмĕнче вĕренекен, университетра пресс-служба тата информаци пайĕнче тăрăшакан Юля Краузе. Хушамачĕ кăсăклă хĕр упраçăн. Пĕрре те чăвашла мар. Тӳрех калар, хӳхĕм пикен нимĕç хушамачĕ – амăшĕн еткерĕ. Çак хушамат тĕнчере анлăн сарăлнă, çавăнпа Чăваш Ене те «çитнинчен» тĕлĕнмелли çук. Краузе – «кăтра» тенине пĕлтерет.



Хастар пикепе паллаштарар «Самант» тусĕсене. Юля калăпланă видеороликсене чылай студент курнă ĕнтĕ, тен, ыттисен куçĕ тĕлне те пулнă ун ĕçĕсем. Вĕсенчен паллăраххисем – Чăваш патшалăх университечĕн пĕтĕм тĕнчери çыхăнăвĕсене, Суд тата медицина экспертизи лабароторийĕн Шупашкарти филиалĕн ĕçĕ-хĕлне çутатни. «Мускав районĕ – чи студентлă район» ролик вара «Мускав районĕ хула çыннисен куçĕпе» конкурсра çĕнтерӳ дипломне çĕнсе илнĕ. Юля – çӳлшай технологийĕсен ĕмĕрĕн пики, компьютер тĕнчин мал çунатлă кайăкĕ. Ытла «технологилетес» мар хĕр упраçа, палăртас: çав вăхăтрах чĕрĕ пурнăç тĕпчевçи, çамрăксен чункăмăлĕпе паллаштараканĕ те вăл.

Ырми-канми пике регионсем хушшинчи «Аслă Атăл çамрăклăхĕ» конференци-фестивале яланах хутшăнать, телевидени передачисене те ертсе пырать. Студентсен Пĕтĕм Раççейри 47-мĕш наука конференцийĕнче вăл «Журналистикăри бизнес коммуникацийĕсем» секцире çĕнтерӳçĕ пулса тăнă. 2010 çулта, виççĕмĕш курсра вĕреннĕ чухнех, Альберт Канаш ячĕллĕ çамрăксен премине тивĕçнĕ. Çак премине вара чăваш наци культурине чĕртес тесе тăрăшнисене параççĕ. Тăван культурăна чăн чĕртесси чăваш чĕлхи шайĕнче çеç пымасть. Сăвапла ĕçе халăхпа кар тăрса пурнăçламалла. Вара тин хал тинĕсĕ таврăннине курăпăр.

Чăваш Республикин талантлă та хастар çамрăкĕ сене халалласа, вĕсен ӳсĕмне çутатса телевидени передачисем хатĕрлекен Юля хăйĕн пултарулăхĕнче çамрăк ăрăвăн патриот туйăмĕ пе аталанмаллине, пурнăçра хастарлăх кирлине яланах палăртать. Яшсемпе хĕрсен чунĕсем мăкланмалла мар.

Юля 13-ре чухнех Юрий Гурьяновăн «61 телестуди» (халĕ «ЮТВ видеокомпани») пултарулăх курсĕсене çӳренĕ. «Пурнăç чăнлăхĕ ачасен куçĕпе», «Çамрăксем пурнăç чăнлăхĕшĕн», «Хускалу – вăл пурăнăç», «Шупашкар тата культура» («Чебоксары – культурная столица»), «Тĕп хула вĕренĕвĕ» программăсене ертсе пынă хĕр ача, вĕсене хатĕрлеме-калăплама та хутшăннă. Шупашкарти 2-мĕш лицейра аттестат илнĕ тĕле малалла ăçта вĕренме каяс ыйту тăман уншăн. Пĕтĕмпех паллă – аслă пурăнăçра ăна журналистика тĕнчи кĕтет.

– Ыттисем пек пуçа ватмарăм. Журналистика факультетне заявлени патăм. Пуян портфолио пулнăран тата хам тăрăшнăран тӳлевсĕр вĕренмелли вырăна лекрĕм, – аса илет Юля аслă шкул алăкне уçнине.

Пултарулă студентка 2009, 2011 çулсенче ЧР Президенчĕн стипендине тивĕçнĕ. Аслăй дисциплинисемпе тĕслĕхлĕ ĕлкĕрсе пыракан, журналист ĕçĕнче хăйне пултаруллă кăтартакан, аслăлăх тĕпчевĕсемпе палăрнă Юля Краузе Раççей правительствин стипендиатки пулса тăчĕ халĕ.

– Çамрăксене, шкул ачисене эпĕ пурнăçра питĕ хастар пулма сĕнетĕп. Чунăрсене парса вĕренĕр, çав вăхăтрах кăмăла мĕн килĕшни пирки те манса ан кайăр. Кирек мĕнле ăмăртăва та хутшăнма тăрăшăр. Çĕнтерес шанчăк кашнинех пур – çакна яланах асра тытăр. Çитĕнĕвĕрсем нумай пулсан та – нихăçан та малалла утма ан чарăнăр, ан ӳркенĕр. Шухăшăрсем хăюллă, ĕçĕрсем ăнăçуллă пулччăр! – ырă сунчĕ малкай студентка «Самант» тусĕсене (вĕсем вара пирĕн – аптраса ӳкекенсем йышши мар!).

– Юля, чун-кăмăла килĕшни пирки аса илтĕн. Ăнланмалла ĕнтĕ, эсĕ пулемет пекех пĕр чарăнми тем вĕренме те тăрăшатăн пулин те – пурнăç пур пĕр канусăр пулмасть. Мĕнлерех канма юрататăн, мĕн патне чун выртать? – «Самант» тусĕсен асĕнче Юля ĕçре-вĕренӳре типсе çунса кайнă çын кĕлетки манерлĕн çеç тăрса ан юлтăр тата тесе ыйтса пĕлес терĕм хĕр упраçран.

– Чуна тыткăнлаканни – çут çанталăк ытамĕнче канни. Хамăр çемьере вăхăта хăш чух айкашса тенĕ пек ирттерме те кăмăллатăп – манăн икĕ шăллăм пур. Вĕсемпе калаçма питĕ интереслĕ – çĕнĕ ăру çитĕнет. Канма вара Атăл леш енне кайма тăрăшатпăр. Хĕлле йĕлтĕрпе вăрманта уçăлса çӳретпĕр е конькипе ярăнатпăр. Килтен ниçта тухмасăр ларакан çын мар эпĕ.

– Диплом çамрăка тĕрлĕ çул уçать. Тăçта та кайма пулать унпа. Вĕренсе пĕтерсен хăшĕсем урăх ĕçпе пурнассине пытармаççĕ те. Сан шухăшсем вара улшăнмаççĕ, тĕрĕс-и?

– Университет хыççăн хамăн специальнăçпах ĕçлетĕп. Диплом илсен те малашне вĕренмелли нумай. Юратнă ĕçе пĕлсе çитме ĕмĕр тăршшĕпех ӳсмелле. Кашни çыннăн пĕр вĕçĕмсĕр аталанмалла.

Юля Краузе пекех вĕренӳре те пурнăçра тăрăшуллă та аталануллă пулма сунать «Самант» тусĕсене. Çамрăклăх çунатлă, унăн вĕçевĕ хамăртан килет. Малалла та çӳлелле, яшсемпе хĕрсем!

**Мариетта МАКСИМОВА**

# Çулăмпи

Мĕн каласси, Енĕш Нăрваш шкулĕнче вĕренниех – пысăк чыс. Хĕллене те пултарас килмест хавхаллă ялта: тăван халăх кун-çулĕн ас тăвăмне упракан истори тусанне хуплать таса шурă юр! Енĕш Нăрвашăн тепĕр асамĕ – вăл чипер пикесемпе чăваш тĕнчине илемлетни те хăватлатни. СССР халăх артистки Вера Кузьминана туптанă вут-кăвар халĕ те хĕмленет кунта, унăн хĕрӳлĕхĕнче хĕр упраçсен ăрăвĕсем чун-кăмăлне шăратса аслă çула тухаççĕ.

Таня Лазарева 9-мĕш класра вĕренет. 1-мĕш класранпах вăл тăван шкул асамĕн чечек кăшăлĕнче. Яланах «пиллĕк» паллăсемпе ĕлкĕрсе пынă хĕр упраç ăçта кăна çитмест, мĕн кăна пĕлмест! Кĕçĕн классенченех ăсхыв (интеллект) ăйăйисене хутшăнать. Вăтам ӳсĕме çитсен район олимпиадисене «хăнана» çӳреме тытăнчĕ. 7-8 классем хушшинчи район олимпиадинчи вырăс литературипе мала тухрĕ, акăлчан чĕлхипе, обществознанипе, чăваш чĕлхи тата литературипе, тăван ен культурипе – тупăшусен призерĕ.



Пултарулăх ăмăртăвĕсем пикешĕн чун çемми. Пенза облаçĕнчи Заречный хулинче ирттернĕ «Пирĕн кил – Çĕр-анне» ятлă Пĕтĕм Раççейри II викторинăра хими ăслайĕпе – призер, республикăри «Сталинград, Сталинградăм – эс çулăмпа хупланнă!» дистанциллĕ конкурсăн призерĕ, «Пăтраннă тапхăр тата 1812 çулхи Аттелĕх вăрçи» темăсемлĕ «Ăслă-тăнлă ачасемпе хĕрсем» республикăри ăсхыв ăйăйин çĕнтерӳçи, Чăваш Енре ирттернĕ «Кайăксене пулăшар!» интернет-ăйăн призерĕ, «Тантăш» хаçатра – викторина призерĕ, «Ăслă-тăнлă ачасемпе хĕрсем» районти ăсхыв ăйăйин çĕнтерӳçи. Сталинград патĕнче 70 çул каялла нимĕç фашисчĕсен çарне аркатса тăкнине халалланă «Сталинград çапăçăвĕ: хроника, фактсем, çынсем» сочинени-тĕпчев конкурсĕнче хĕр упраçăн ăслай ĕçне чи лайăх теçеткере тесе палăртнă. Маттур Таня! Енĕш Нăрваш – пĕр сăмахпа.

Калаçма та хăрамалла çакнашкал хастар хĕрпе. Шикленнине çавах палăртмасăр малалла паллаштарар пуль ытарма çук чипер пикепе. Темиçе çул ĕнтĕ Таня пĕтĕм тĕнчери ăйă-тупăшусенче хастарлăхпа палăрать, «Вырăс упа çури – пурне те май килекен чĕлхе пĕлĕвĕ», «Кенгуру», «Британи бульдогĕ» ăмăртусенче те çĕнтерне вăл. Палăртсах хăварар, «Чăваш чĕкеçĕ – пурне те май килекен чĕлхе пĕлĕвĕ» конкурсра та палăрнă Таня. Пĕтĕм Раççейри шкул ачисем хушшинче хими ăслайĕпе ирттернĕ олимпиадăра муниципал тапхăрĕнче 2-мĕш, вырăс литературипе 3-мĕш вырăнсене тухнă. Тăвай районĕн пуçлăхĕн грантне те тивĕçнĕ.

Çулсерен пуçтарăннă Мухтав хучĕсене шкула илсе пырас тăк – черчен пикене пулăшма мăн чăматан тыттарнă ятарлă паттăра уйăрмалла: унсăрăн май çук. Хĕр упраçăн портфолио çӳпçинче 70 ытла диплом-грамота! Тем тесен те, мухтав чĕркем-çĕклемне пĕччен йăтса çитерееc çук Таня.

Чăнах та, хисеплĕ Татьяна Сергеевнăпа çакнашкал паллаштарсан, «Самант» тусĕсем кĕнеке ăшне путнă, хăçан йăл кулнине те манса кайнă хĕр упраçа курчĕç пуль ĕнтĕ ăшĕнче. Çавăнпа асăрхаттарар, журналта пичетленнĕ пикен сăн ӳкерчĕкĕ суймасть сире. Юрă-кĕвĕ пултарулăхĕнче шăпчăк пек юрлакан Таня – шкулти КВН ушкăнĕн капитанĕ! Çивĕч ăс-тăнлă хĕре чĕлхе енчен те тур панă. Вутра та çунман, шывра та путман чиперкке ертсе пынипе «Темăри çамрăксем» КВН ушкăнĕ пĕлтĕр районта 3-мĕш вырăна тухнă. Татьяна Сергеевна «Зарница» хастарĕсене те ертсе пыни вара мĕн калать «Самант» тусĕсене? «Зарницăн» пултарулăх блокĕнче Енĕш Нăрвашăн çамрăк çуйĕçĕсем районта пĕрремĕшсем пулчĕç. Калашников автоматне куçне хупса сӳтсе-пуçтарса хурать Татьяна! Аллине гранатомет тыттарсан та – çак хĕç-кăрала ĕмĕрĕнче пуçласа курать пулин те – унпа нимĕн те мар усă курма пĕлет вăл: иккĕленместпĕр.

Хĕр пĕрчи чухнех шкул пурнăçĕнче хастар пулнă Таня. Класс тулашĕнчи мероприятисене ертсе пырассипе пĕр пăт тăвар çинĕ. Паллă кунсене йĕркелеме те ăнах шанаççĕ – темле ĕçе те яланах тивĕçлĕн вĕçне çитерет. Вĕренекенсем те итлеççĕ ăна, ырă кăмăлĕшĕн, яланах пулăшма хатĕрришĕн, сăпайлăхĕшĕн хисеплеççĕ. Вырăс литературин классикине юратать Татьяна. Пушкин, Тургенев, Лермонтов тĕнчисенче чунне кантарма кăмăллать. Ытти çыравçăсене тиркенине пĕлтермест ĕнтĕ ку. Яланах районти наукăпа практика конференцийĕсене хутшăнаканскер, виçĕм çул, 7-мĕш класра вĕреннĕ тапхăртах, «А.Платоновăн «Паллă мар чечек», В.Гришинăн «Шапапа кĕл чечек юмахĕ» халапсен шухăш-ӳнерлĕх хăй евĕрлĕхĕ» тĕпчев ĕçĕпе 7-11 классем хушшинчи район олимпиадинче 1-мĕш вырăна тивĕçнĕ. Чăваш литературинче вара мухтавлă ентешĕн – Хумма Çеменĕн пултарулăхне мала хурать.

Мĕн каласси, пурте Таня пек хастар пулсан – чăваш ачи-хĕрĕсем çут тĕнчене хальччен 7-мĕш тӳпене çитиех хăпартса хунăччĕ.

Енĕш Нăрваш хĕрĕсен чечек кăшăлĕн хӳхĕм çеçкине «Самант» тусĕсене пиллеме ыйтрăмăр эпир.

– Тантăшсене вĕренӳре ăнăçу сунатăп. Шанчăклă та парăннă туссем юнашар пулччăр. Спортра хастарлăх кăтартăр. Тĕрлĕ шайри тупăшу-ăмăртăва хутшăнма ан ӳркенĕр. Чун туртни тĕрлĕрен пултăр, çак туртăм ан сӳнтĕр, ӳснĕçемĕн ялкăшсах хĕрӳлентĕр. «Самант» тусĕсем мĕн пĕлменнине пĕлес, çĕннине шырас, ĕмĕте пурнăçлас тесе яланах çунса тăччăр! Ырă сунса – Таня Лазарева.

**Владимир СТЕПАНОВ**

# Кӳршĕ хулари тамăк

Раштавпа кăрлач уйăхĕсем Раççейшĕн халĕ те чан кĕрлевлĕн янăраççĕ. Çĕр-шыв шăпиллĕ, тĕнче малашлăхĕллĕ килсе тухнă вĕсем хăй вăхăтĕнче. Хĕрлĕ Çар 1941 çулхи хĕлле пуçланă наступлени совет халăхĕшĕн тинех шанчăк, тĕнчешĕн тăнăçлăх илсе килнĕ. 1941 çулхи авăн уйăхĕн вĕçĕнче тытăннă Мускав çапăçăвĕ 1942 çулхи ака уйăхĕччченех пынă пулин те нимĕçсем Мускава илеççĕ е илеймеççĕ ыйту кăрлач уйăхĕнче татăлнă – тăшмана 100 çухрăм яхăн чактарнă. Раштав-кăрлачри ахăр çапăçу Мускав патĕнче нимĕç «Тайфунĕн» çуначĕсене хуçнă. 1942 çулхи кăрлачăн 12-мĕшĕнче СССР Аслă Канашĕн Президиумне каялла Мускава тавăрма йышăннă. Эвакуациленĕ предприятисем те тĕп хулана куçма тытăннă.

Мĕн пытарасси: вăрçă халăха питĕ хăратнă. Совет Союзĕ Германие çĕнтерес çук пуль тесе шанчăк сӳннисем те чылайăн пулнă. Чăваш Енре те çынсем хăйсене тарăн тылри пек туйман. 1941 çулхи чӳк уйăхĕнче нимĕç авиацийĕ Чăваш АССР тӳпине те куç хывнă. Республика тĕп хулине мĕнле бомбăланине «Самант» çырса кăтартнăччĕ ĕнтĕ (2012, 2№). Шупашкартан тӳртен вĕçсен 202 çухрăмра çеç вырнаçнă Чулхулана вара нимĕç авиацийĕ темиçе хутчен те тапăннă. Çак синкерлĕ кăрал лару-тăрăва тĕплĕнрех çутатса парас тет журнал: вăрçă кӳршĕрех кĕрленĕ, бомбăсем юнашарах çурăлнă!

## Чӳкĕн 4-мĕшĕ

Чулхула облаçне малтанласа 1941 çулхи юпан 22-мĕшĕнче бомбăланă. Дзержинскран 18 çухрăм анăçарах вырнаçнă Володарск поселокĕ çийĕн «Юнкерс-88» бомбардировщик курăнса кайнă. Пиккене кĕрсе самолет Сейма станцинчи çăнăх заводне тата 154-мĕш базăна 3 фугаслă бомба пăрахнă. Сехре хăпнă халăхра «кĕçех нимĕç десанчĕ анать», «нимĕçсем Володарск патне çитнĕ» текен сăмах сарăлнă.



Хейнкель-111

Чулхулан сывлăш хӳтĕлевĕ пит чаплах пулман. Тупма пултарнă темиçе теçетке зениткăран – çурри 1-мĕш тĕнче вăхăтĕнчи 76 мм тупăсем тата трофейлă «Бофорс» фин пушкисем. Хусанпа Аçтăрханта зениткăсем пачах пулман. Сталинградпа Саратовра вара вĕренӳ чаçĕсенчен вицшер теçетке тӳпе туппи пуçтарма пултарнă. Самарта çеç лару-тăру чипертерех тухнă: унта 767-мĕш тата 862-мĕш зенитка полкĕсем, прожекторлă 3 батальон тăнă.

Брянск облаçĕнчи Сеща аэродромĕнче базăланакан 2-мĕш сывлăш флочĕн «Хейнкель-111» бомбардировщикĕ Чулхулана малтанласа чӳкĕн 4-мĕшĕнче бомбăланă. Çурçĕр иртсе 1 сехет те 40 минутра автомобиль заводне виçĕ хăватлă взрыв чĕтретнĕ. 750 çухрăмран вĕçсе килнĕ бомбардировщика никам та пемен.

Çурçĕр иртни 2 сехет те 20 минутра тĕл çине тепĕр «Хейнкель» тухнă, 500 килограмлă икĕ бомба пăрахнă. Телее, штурман йăнăшнăран вĕсем Т-60 çăмăл танк тăвакан завод корпусне лекмен.

Кăнтăрла иртсе 4 сехет те 10 минутра Ока çийĕнчи пĕлĕтсенчен ВМ-1000 мина çакнă «Хейнкель» сиксе тухнă. Сывлăш посчĕсем самолета асăрхаманран хулара тревога паман. Тонна таякан мина Ленин ячĕллĕ заводăн 4 хутлă тĕп корпусне лекнĕ. Тобол казармисем енчен бомбардировщика зениткăсем пеме тытăннă. Пилот вара ним пулман пек Чулхула кремльне курма вĕçнĕ, ун çийĕн çаврăм тунă. Летчиксем пуçĕсене кабинăран кăларса хăраса ӳкнĕ çынсене ал сулсах «саламланă».

Тепĕр 10 минутран Чулхула тӳпине тепĕр икĕ бомбардировщик çитнĕ. Хула çийĕн вĕсем питĕ аялтан вĕçнĕ. Пĕр «Хейнкелĕ» автозаводăн юсавпа механика цехне 250 килограмлă 4 бомба пăрахнă. Вĕсенчен пĕри столовăйĕнче сирпĕннĕ, унта пулнă çынсене татăккăн-татăккăн ваклане. Тепĕр самолечĕ автозаводăн электростанцине 2 бомба ывăтнă. 16 сехет те 40 минутра тӳпере каллех «Хейнкель» курăннă. Ока çийĕн пырса бомбардировщик «Двигатель революции» завода тоннăллă мина пăрахнă.

Талăк хушшинче нимĕçсем Горькие пурĕ 13 самолет-вĕçев (8 тапăну) ирттернĕ тата тепĕр икĕ бомбардировщик тухăçарах вырнаçнă хуласемпе поселоксене атакăланă (вĕсенчен пĕри шăпах Шупашкара тапăннă). Чулхулара радио-телефон завочĕ тата минометсем кăларакан «Двигатель революции» завод юрăхсăра тухнă. Зенит батарейисем самолетсене 13 пин снаряд, пулеметчиксем 4620 пуля кăларса янă, анчах пĕр бомбардировщика та сиенлетеймен. Сывлăша темиçе хут çĕкленнĕ ЛаГГ-3 истребительсем те пĕр «Хейнкеле» те çапса антарайман. Нимĕçсем вара пĕр совет «хурчкине» хытах лектернĕ, лешĕн Богородск патĕнче «хырăмпа» анса ларма тивнĕ. Бомбардировщиксем тепĕр икĕ истребителе те аванах сиенлетнĕ.

## Чӳкĕн 6-мĕшĕ

Авиаци тапăнăвĕ хыççăн Чулхула сывлăш хӳтĕлев штабĕн пуçлăхĕ Савко подполковник хулана бомбăлама пурĕ 150-160 самолет пынă, вĕсенчен 11-шĕ кăна Горький тӳпине вĕçсе кĕрейнĕ тесе донесени çырнă.

Чӳкĕн 5-мĕшĕнче 2-мĕш сывлăш флочĕ фронт тĕллевĕсене пурнăçланă: совет аэродромĕсене, чугун çул станцийĕсене, Серпухова бомбăланă. Пĕр «Хейнкель» Мускава та вĕçсе кайса килнĕ, 10 бомба пăрахнă. Каç кӳлĕм нимĕçсем Чулхулана та атакăлама йышăнаççĕ. Кăрал вĕçеве самолетсем пĕчченшерĕн е пĕчĕк ушкăнсемпе кайнă. Тапăнăва 14 самолет хутшăннă.



Пĕрремĕш бомбăсем чӳкĕн 6-мĕшĕнче, çурçĕр иртсе 1 сехет те 47 минутра автозаводăн Адмцентр поселокĕнче çурăлнă. Бомбардировщиксем автозавода, Сормовăна, авиаци заводне, артиллери заводне, Жданов районне атакăланă.

Зенит батарейисем 9 пин снаряд кăларса ярса та самолетсене сиен кӳреймен. ЛаГГ-3 истребительсем хальхинче те пĕр бомбардировщика та çапса антарайман, «Хейнкельсем» вара пĕр ЛаГГа сиенлетнĕ, истребитель Сейма аэродромне анса ларнă. Талăк хушшинче авиаушкăнри 9 истребительтен 4-не нимĕç бомбардировщикĕсен стрелокĕсем аванах сиенлетнĕ.

Сывлăш хӳтĕлев штабĕ ирхине çырнă донесенире вара тапăннă 136 бомбардировщикран хула тӳпине 14-шĕ çеç çĕмĕрсе кĕрейнĕ тесе кăтартнă, «Не-111»-сене кăна мар, «Ju-88», «Ju-86» самолетсене те асăннă.

Çакăн хыççăн, планпа килĕшӳллĕн 2-мĕш сывлăш флотне Сицилие ăсатнă май («Тайфун» операци хĕрӳ самантĕнче!), Горькие бомбăласси чарăннă. Çапла вара, «Хейнкельсем» радиотелефон заводне тĕппипех аркатнă, «Двигатель революции» завод та пĕр хушă 82 мм минометсем пачах кăларма пăрахнă. Автозавод та пысăк сиен тӳснĕ. Чӳкĕн 6-мĕшĕнче Германири «Фелькишер беобахтер» хаçат нимĕç авиацийĕ Горькие бомбăлани çинчен çырса кăтартнă.

## Вутлă тӳпе

1941 çулхи чӳкĕн 4-6 мĕшĕсенче миçе çын вилни халĕ те паллă мар. Сывлăш хӳтĕлевĕн штабне «ĕненес» пулсан, хула çыннисенчен малтанхи тапăнура 35 çын вилнĕ, 230-шĕ аманнă, тепрехинче 5 çын вилнĕ, 21-шĕ аманнă. Хальхи цифрăсемпе килĕшӳллĕн, 127 çын вилнĕ, 371 аманнă (вĕсенчен 176 йывăр аманнисем). Теприсен шучĕпе, вилнисем кăна 400 яхăн çын пулнă.

Чӳк уйăхĕнче нимĕç авиацийĕ Чулхулана кăна мар, Сталинградпа Ярославле те бомбăланă. Тапăнусем хыççăн Атăлçи хулисен сывлăш хӳтĕлевне вăйлатма йышăннă. Горькие хӳтĕлеме тĕрлĕ калибрлă 300 тӳпе туппи, 150-200 зенит пулемечĕ, 250 истребитель тата 130 прожектор уйăрма йышăннă (фантастикăлла цифрăсем!).

Çĕнĕ çул каç нимĕç летчикĕсем Чулхула çыннисене «пĕчĕк парне» пама йышăннă. Копак обер-лейтенантăн «Юнкерс-88» самолечĕ Горький тӳпине тухнине никам та асăрхаса ĕлкĕреймен. Бомбардировщик пĕр чăрмавсăр бомбăсем пăрахнă та каялла кайнă, Оршăри аэродрома чиперех çитнĕ.

1942 çулхи нарăсăн 3-мĕшĕнче çĕрле Чулхула енне калăпăш çутиллĕ самолет вĕçнине асăрханă сăнавçăсем. Ăна пассажир е транспорт самолечĕ тесе йышăннă, Чулхула штабне те пĕлтернĕ. Штабри оперативлă дежурнăй вара çутă çутса вĕçекен самолета тăшман тесе шутламан та. Никам та тапăнăва кĕтмен. Çур çĕр иртсе пĕр сехет хыççăн Горький автозаводĕнче хăватлă икĕ взрыв кĕрленĕ. Пĕр фугас бомби мотор цехĕнче, тепри –



ЛаГГ-3

урапа цехĕнче çурăлнă. 17 рабочи вилнĕ, 40-шĕ аманнă. Мотор цехĕнчи пушара тепĕр 7 сехетрен çеç сӳнтерейнĕ.

Тепĕр кунне, çĕрле 2 сехет те 35 минутра, Чулхулара каллех сывлăш тревоги янраса кайнă. Нимĕç бомбардировщикĕ Т-60 çăмăл танк пуçтаракан цеха икĕ фугаска пăрахнă, 1 çын вилнĕ, 2-шĕ аманнă. Тепĕр виçĕ бомба автозавод çумĕнчи Стаханов поселокĕнче çурăлнă – 1 çын вилнĕ, 3-шĕ аманнă.

Люфтваффе Атăлçире пĕрремĕш самолетне Çĕнĕ çул умĕн çухатнă. Сталинград тӳпине разведкăна тухнă «Ju-88» бомбардировщика Юрий Лямин сержант Як-1 истребительпе яртытса (перехват) илнĕ. Иловлинск станицийĕ тӳпинче летчик тарана кĕнĕ – «Юнкерса» çапса антарнă. Станица колхозникĕсем парашютпа сикнĕ икĕ летчика тыткăна илнĕ (виççĕмĕшĕ вилнĕ). Сиенленнĕ Як-1 вара Дон çеçен хирне «хырăмĕпе» чиперех анса ларнă.

Нимĕçсем Чулхулана 1943 çулхи çулла уйрăмах нумай бомбăланă, ку – Аслă вăрçăн тепĕр çаврăмĕ.

**Льеж МУР**



Юнкерс-88

# Тăван тăрăх, чун кĕтесĕ



Эпĕ Шупашкарти 17-мĕш шкулти 8 «б» класра вĕренетĕп. Канмалли кунсенче яла – асаттепе асанне патне каятпăр. Вĕсем Çĕрпӳ районĕнчи Вăрманкасра пурнаççĕ, автобус вара Ямаша (Чиркӳллĕ Ямаш) çити çеç çӳрет. Автобусран анатăн та – чăрăнуран инçех те мар ларакан чиркӳ куç тулли тухса тăрать. Унăн илемĕ, пуçтарăнчăк тăпăллăхĕ яланах чуна илĕртет. Кам ăна пуçласа курать – вăл вара куçне те илеймест. Капăрлăхĕпех хавхалантарать чиркӳ. Унăн çавра тăррисем ылтăн çутипе çиçеççĕ, хĕресĕсем çунат сарнă тейĕн – халь-халь пĕлĕте вĕçсе хăпарас пекех туйăнаççĕ. Хĕвел çутинче вĕсем уяв вут-хĕмлĕллĕн çиçеççĕ.

Тахçанах шала кĕрсе курас килетчĕ чиркĕве. Пĕлтĕр çулла вара атте-аннепе унта кĕтĕмĕр. Турă çурчĕн картишĕнче – кăвак чечек кӳлли. Янкăр тӳпе тĕкĕрленнĕ пекех. Шăнкăрав курăкĕ евĕр çеçкесем пĕр-пĕрин çумне çыпçăннă, тем ĕмĕтленнĕн кашни пĕлĕте тинкерет. Хулари клумбăсенче вĕсем пусĕсене усса лараççĕ, кунта вара чиперлĕхĕпе карăннă.

Чиркӳре питĕ илемлĕ, тулта шăрăх пулин те – шалта сулхăн. Йĕри-тавра турăшсем. Çуртасем çунаççĕ. Çынсем шăппăн кĕл туни шăплăх асамне вăйлатать çеç. Пуçтарăннисем сăвап ыйтса та сăх сăхса турăшсем умне çурта лартаççĕ. Эпĕ те ыттисенчен юлмарăм. Мĕн тумаллине аттепе анне каласа тăчĕç.

Çак чиркĕве çамрăк чух вĕсем те çӳренĕ, асатте-асанне кăна мар, аслăрах ăрурисем те кунта кĕлле кĕнĕ. Тăван кĕтесĕн вăхăт чуппи йĕр хăварнă Турă çуртĕнче. Тăван кĕтес, тăван тăрăх тени мĕне пĕлтерни пирки унччен пит пуçа çĕмĕрмен эпĕ. Чиркӳрен тухсан вара çак сăмахсен ытарĕ чуна пырса тиврĕ. Ахальтен каламаççĕ: «Тăван çĕр-шывпа, тăван кĕтеспе мухтанмалла!» – тесе. Тăван тăрăх ытамĕнче манăн несĕлсен пурнăçĕ иртнĕ, хир-вăрманĕ халĕ те ас тăвать пуль вĕсене. Мăн асатте те, вăрçа кайнă чух, хĕрес хывса иртнĕ ĕнтĕ чиркӳ патĕнчен.

Çакăн хыççăн Ямаш чиркĕвĕн кун-çулне пĕлес килчĕ. Тăван тăрăхăн историйĕ те кăсăклантарчĕ. Тăвансенчен, ваттисенчен ыйтса тĕпчерĕм, библиотекăсенче те материал пуçтартăм. Собор храмĕ е собор тесе епархи хулисенчи кафедра чиркĕвĕсене калаççĕ иккен. Хулари тĕп чиркӳсене, хăш-пĕр ялсенчи е пысăк мăнастирсенчи Турă çурчĕсене те çаплах палăртаççĕ. Чăваш Енре соборсен шутне Шупашкарти Введени тата Никольски (Владимир) храмĕсем, Улатăрта – Раштав, Сĕнтĕрвăрринче – Троица, Çĕрпӳре – Троица, Етĕрнере – Господень Преображени храмĕсем кĕнĕ. Шупашкарти ар çын мăнастирĕнчи Троица, Улатăрти ар çын мăнастирĕнчи Троица, Çĕрпӳри хĕрарăм мăнастирĕнчи Тихвин Турă Амăшĕн храмĕсем те – соборсем. Чиркӳ округне кĕрекен ял-хула халăхĕ Турă çурчĕпе притч тытса тăма хевте çитерсен – прихут чиркĕвне уçнă. Раççейре ытларах ĕнтĕ прихут чиркĕвĕсем пулнă.

1898 çулта Çĕрпӳ уесĕнчи Ямаш хресченĕсем – 410 чун ячĕпе – Асамçă Гурий чысĕллĕ храм хăпартма халăх приговорĕпе ирĕк илнĕ. Приговорта хăйсем Чурачăк прихутĕнче шутланнине, ял вара 8 çухрăмра ларнăран Турă сăмахне итлеме çӳреме кансĕртереххине палăртнă. Çурпа-кĕрпе вара Чурачăка кайса килме те май çук тенĕ. Храм лартма кирлĕ хатĕр пуçтарма, чиркӳ притчне тытса тăма, 10 çул таран кашни чунран 1 тенкĕ пуçтарса пыма шантарнă халăх.

Кăсăклă тепĕр материал та тупрăм. Шупашкар уесĕнчи Шăнчас хресченĕсем 1916 çулта чиркӳ хăпартасси пирки халăх приговорĕ тунă. Вĕсем иккен тутарсен пысăк ялĕпе – Мăналпа – юнашар пурнаççĕ, унта вара 3 мичĕт, мăсăльмансем ислампа илĕртеççĕ. Чăвашсем хушшинче хавшак кăмăллисем, иккĕленекенсем ан тупăнччăр тесе шăнчассем чиркӳ лартма йышăннă.

XIX ĕмĕр вĕçĕнче XX пуçламăшĕнче чăвашсен йышĕ 998698 çын шутланнă, вĕсем 15 кĕпĕрнере, 4 облăçра, 55 уесра пурăннă. Православи йышăннисем 981338, халăх тĕнне тытакансем 14734 çын пулнă. Мăсăльмана куçнисем 2334 çын, православин кивĕ йĕркипе пурăнакансем те тупăннă – 100 чун. Тĕрлĕ сектăра тата 200 чăваш шутланнă. Хальхи Чăваш Республикин территорийĕнче 2129 ялта тĕпленнĕ тăван халăх. Вĕсенчен 1632-шĕнче чăвашсем çеç пурăннă.

1837 çултах Удел департаменчĕн вице-президентне Л.Покровские Чĕмпĕрти удел кантурĕн ертӳçи А.Глинка вăрттăн рапорт тăратнă. Идолсене пуç çапса пурăнакан Чĕмпĕр тата Пăва уесĕсенчи чăваш ялĕсенче чиркӳсем хăпартас ыйтăва çĕкленĕ. Çакăн хыççăн Суйкăнра, Палтиелте, Анат Тимĕрченте, Çĕнĕ Эйпеçре, Тури Туçара храмсем уçма йышăннă. Таврари халăха вара вĕсен прихутне çирĕплетнĕ.

И.Яковлев ĕçтешĕ Даниил Филимонов çинчен çырнă кĕнеке те лекрĕ ман алла. Вăл пачăшкă кăна мар, вĕрентекен, çыравçă, тăлмачă, халăхшăн тăрăшакан пулнă. Даниил Филимонович хальхи Çĕрпӳ районĕнчи Аслă Тукаленче çуралса ӳснĕ. 1924 çулта çĕнетнĕ Синод хушăвĕпе килĕшӳллĕн Шупашкар епископĕ, Чăваш епархийĕн викарийĕ пулса тăнă. Чăвашран тухнă пĕрремĕш архиерей вăл. Унчен çакнашкал пысăк сана тивĕçнĕ чăваш пулман.

Чиркĕве йĕркелесе тăракан Синод совет саманинче чылай храмсене сыхласа хăварма май панă. Вĕсен йышĕнче – Çĕрпӳ районĕнчи Ямаш чиркĕвĕ те. Шăпах çакăнта иртнĕ те Д.Филимоновăн юлашки çулĕсем.

**Артем ИВАНОВ**





# Хунав

Вăрман яланах илемлĕ. Çуркунне пĕтĕм тĕнче вăраннă чух ун хитрелĕхĕ уйрăмах хăйне евĕр. Хĕвел чăрмантарнăшăн кăмăлсăр пулнăн тавралăх хĕллехи ыйхăран вăранать. Çурхи шыв хавассăн çырманаллаваскать. Уçланкăри тĕмескесем юртан тасалнă. Шухă çил ачисем çара йывăççене кăтăкла-кăтăкла енчен-енне силлеççĕ. Çуркунне çитрĕ!

Хĕвел ăшши çут тĕнчене улăштарчĕ, йывăççен айне чечек кавирĕ сарчĕ. Икĕ тунката хушшинче çинçе хунав симĕсленет. Пĕрремĕш хут çуркуннене курнăскер куçне мăч-мăч хупкалать. Йĕплĕ хунавăн хăй камне пĕлесси килчĕ. Юнашар ӳссе ларнă чечек çине пăхса йăл кулчĕ. Лешĕн кăвак кĕпи куçа йăмăхтарчĕ, тутлă сывлăшĕ чуна кăтăкларĕ.

Хунава, паллашнă евĕр, хĕвел пайăрки ăшшăн сĕртĕнчĕ. Ачашланине чăтаймасăр йĕплĕ хунав тӳпенелле тинкерчĕ. Çӳлте патвар Юман мăнаçлăн сарăлса ларать. Инçех мар шурă кĕпе тăхăннă, çӳçне кăтралатса вулле янă Хурăн. Вĕсен тураттисем пĕр-пĕрин çумне сĕртĕнсе илемлĕ кĕвĕ кăлараççĕ. Вăрманти кайăк-кĕшĕк юрă шăрантарать. Пилеш кайăкĕн чĕвĕл-чик-чă-р! сасси таврана янăрать. Акă инçех те мар улатакка параппанне çапса илчĕ.

Хунавăн та Юманпа Хурăн пекех патвар та яштака пулас килчĕ. Тавралăх илемне курас тесе çепĕççĕн ăшăтакан хĕвел патнелле туртăнчĕ йĕплĕ хунав. Илемлĕ те симĕс Чăрăш пулса тĕнчене килнине ăнланаймарĕ-ха хăй…

Кун хыççăн кун, çул хыççăн çул иртрĕ. Чăрăш самаях ӳсрĕ. Юманпа Хурăн ăна сивĕ çумăртан, хаяр çилтен хӳтĕлесе тăчĕç. Хĕл шартламинче вуллисемпе симĕс Чăрăша хупласа ачашларĕç. Тарăн шурă юр вара тымарĕсене ăшăтрĕ. Хунав хăй симĕс Чăрăш пулса ӳснишĕн, юнашар лайăх юлташсем пулнишĕн савăнчĕ. Хĕлле кăпăшка юр-кĕрĕк тăхăнса кайăк-кĕшĕке те чĕр чуна хӳтĕ пачĕ.



Кăçал Чăрăш тураттисем хăмăр-кăвак йĕкел-теттепе çакăнса тулчĕç. Вĕсене кукăр сăмсасем шĕкĕлчерĕç, вăррипе апатланчĕç. Кĕске хӳре мулкачсем те йывăç айне пытанчĕç. Сивĕ хĕлтен те, тăшманран та хӳтĕлерĕ Чăрăш.

Лăпкă та хĕвеллĕ сивĕ кун вăрмана йĕлтĕр сырнă çынсем килчĕç. Юманпа Хурăн умĕнчи мамăк юрпа витĕннĕ чиперккене аякранах курчĕç вĕсем.

Тарăн ыйха путнă Чăрăш шăв-шавпа вăранса кайрĕ. Куçне уçрĕ кăна – ури чăтма çук пĕçерсе ыратса кайрĕ. Пуртăпа касрĕç ăна, шеллемерĕç. Йывăç та ыратнине туйнине пĕр çынни те аса илмерĕ, унăн та пурăнас килни çинчен никам та шухăшламарĕ. Хурăнпа Юман юлташне пулăшас тесе вуллисемпе сулкалашсах кĕрешрĕç, çĕнтереймерĕç. Тăлăха юлнă йывăççем хуçăлнă тураттисем çине пăхса куççульпех йĕчĕç.

Чăрăша пысăк пӳлĕме вырнаçтарса лартрĕç. Вуллисем çине тĕслĕ ялтăркка тетте-ахах çакса тултарчĕç. Тĕнчери чи хитре йывăç пулса тăнă Чăрăш питĕ савăнчĕ. Çĕнĕ çул уявне пуçтараннă ачасене Хĕл Мучипе Юр Пике парнесем пачĕç. Капăр йĕплĕ чун ачасемпе пĕрле юрăсем юрларĕ. Яштака кĕлеткипе, хӳхĕм вуллисемпе чӳхенсе ташланçи турĕ.

Анчах та савăнăç нумая пымарĕ. Тепĕр виçĕ кунран ăна çырмана ним шелсĕр кăларса ывăтрĕç. Ай-ай! Мĕнле сивĕ пăрлак юр çинче выртма. Чăрăш йĕпписем типме пуçларĕç. Вулли-кĕлетки вăйсăрланса пычĕ. Çĕнĕ çул тетте-эрешне çил ачисем çурчĕç, тăпăлтарчĕç, вĕçтерсе илсе кайрĕç.

Мĕскĕнĕн куçĕ умне ачалăхра курнă тункатасем тĕтреленсе тухма тытăнчĕç. Вĕсем те малтан хӳхĕм чиперккесем пулнă. Ашшĕпе амăшĕн шăпи хăйне те пырса тивнине ăнланчĕ çамрăк Чăрăш. Çут тĕнчепе сыв пуллашма юлашки вăйне пухса пуçне çĕклерĕ вăл. Сарă хĕвелĕ те ун нушине курас мар тенĕн тачка пĕлĕт айне кĕрсе çухалчĕ. Тавралăха тĕксĕм тĕс çапрĕ. Тĕнче çути сӳнме тытăнчĕ çамрăк йывăçшăн...

Юлашки сывлăшĕпе чĕтрекен чăрăш йĕлтĕрпе ярăнма тухнă Салампи куçĕ тĕлне пулчĕ. Аран палласа илчĕ вăл уяври чиперккене. Чăрăша питĕ шеллерĕ хĕр ача. Каснă йывăçăн вулли-туратне вĕри куççульпе йĕпетсе пĕве хĕрне, юр ăшне кайса лартрĕ. «Ан хăр, чĕрĕл. Çĕнĕрен тымар яр», – пăшăлтатрĕ Салампи.

Пур çав асам тĕнчере. Чăрăш вилмерĕ. Шурă чатăрпа витĕнчĕ, сивĕ хĕле чăтса ирттерчĕ. Çуркунне вара çут çанталăк ăна тымар яма татах асам-хăват пачĕ. Вăй илчĕ Чăрăш. Ăшĕнче пĕчĕк хĕр ачана ялан тав турĕ. Çĕр çинче ырă çынсем пĕтмен-ха. Çак шухăш ăна савăнтарчĕ. Аслисен чĕри хытса пыни вара кулянтарчĕ. Кун пекех пулсан çут çанталăк тусĕсем çĕр çинче юлĕç-ши!

Вăхăт хăй еккипе шурĕ, çулсем иртрĕç. Салампи те ӳссе çитĕнчĕ. Шкултан вĕренсе тухсан ялтан кайрĕ. Кайран çемье те çавăрчĕ. Тăван ялне манса каймасть Салампи, килсех тăрать. Хушăран куркалать ăна Чăрăш. Çулласерен унăн ачисемпе те вылять. Кайран вĕсем те ӳссе çитĕнчĕç. Яла килме пăрахрĕç. Салампие те тахçантанпах курман çич тӳпене çитесле хăпарнă йывăç. Ывăннă пĕлĕтсем канма чарăнаççĕ унăн тăррине.

Халĕ ĕнтĕ Чăрăш ял хыçĕнче ĕмĕрĕпех ӳснĕн туйăнать. Вăл яланах пулнă, малашне те кашласа ларĕ тейĕн.

Ял йывăççин вара çынсене çапла калас килет: «Этемпе çут çанталăк пĕр çулпа, юнашар утчăр, пĕр пурăнăçпа пурăнччăр. Çакăн пек пĕрлĕх – пулас ăрусен сывлăхĕ, пурăнăç шанчăкĕ. Çут çанталăка çăлса хăвармасан, этем хăй те çăлăнса юлас çук!»

**Людмила КУЗЬМИНА,**
Красноармейски районĕ, Упи шкулĕ

# Ылтăн тулпарсем

Мул-тупра теми – кино-кĕнекен ылтăн çырми. Аякри ăшă тинĕссем леш енчи тăрăхсенче кашни утăмра тенĕ пек мул çӳпçи чавса чикнине ĕненес килет. Хамăр ен пирки вара аса илекен те çук. Ахалех! Атăлçи те пуян мул-тупра пытаранчăкĕсемпе. Тăван халăха мул çуттине кăларас тесе «Самант» çĕнĕ проект – «Атăлçи мул-тупри» ярăм пуçлать. Тĕпелти пĕрремĕш хавха – чи палли те, чи илĕртӳлли: Бату ханăн ылтăн лашисем!

## Сăваптăш палăк

Атăлçи халăхĕсемшĕн синкерлĕ, Чингисхан мăнукĕ, Джучи ывăлĕ Батушăн триумфлă 1236-1243 çулсем. Монголсен Анăç аслă похочĕ вĕçленнĕ. Тухăç Европăра çĕнĕ патшалăх – историре Ылтăн Урта ятпа юлнăскер йĕркеленет. Бату хан патшалăхăн тĕп хулине – Сарая никĕслет. Юратнă араб тулпарĕ (ăратлă ăйăрĕ) вилсен, тус-урхамахне асăнса, шĕкĕр хулан чапне пĕлĕте çити хăпартма Урта ханĕ таса ылтăнран ут кĕлетки шăратма хушать. Питĕ килĕшет ылтăн палăк Чингисхан мăнукне, çавăнпа тепĕр ылтăн тулпара та тума калать. Рубин чулĕсен çутипе хĕмленекен куçлă урхамахсене Сарая пыракан аслă çул çине лартаççĕ. Вĕсем Ылтăн Уртан сăваптăшĕ (святыня) пулса тăраççĕ. Хавха тăрăх, лашасене шăратнă ăстана – Киевран илсе килнĕ шăнкăравсем тăвакан маçтăра – тек никама та çакнашкал чаплă палăк туса ан патăр тесе вĕлернĕ пулать. Ăнланмалла, ыт-ытарлăх кăна ку сăмах. Легендăсенче чаплă ăстасен пуçне яланах çиеççĕ: вĕсен пултарулăхĕн шайне палăртмалли мел ĕнтĕ.

Хитре халап тесе кăна йышăнма пулать ылтăн лашасене палăкланине. Анчах вĕсене курнă çул çӳревçĕсем çырнисем сыхланса юлнă. Чăнахах та пулнă вĕсем! Акă чи паллă куртамăш (свидетельство). Авторĕ – Францисск орденĕн манахĕ, IX Людовик (Çвяттуй) патшан элчи Гильом де Рубрук. «Хапха патĕнче тем çиçсе ялтăртатнине аякранах куртăмăр эпир. Хулара пушар тухнă пуль тесе шухăшларăмăр малтан. Çывăхарах çитсен тин ăнлантăмăр: хăпаракан хĕвел шевлисен ытамĕнче пысăкăшĕпе те, пăхма та чăн-чăн лашасем пекех икĕ ылтăн палăк çиçеççĕ иккен. Çак асамлăха тума мĕн чухлĕ ылтăн кайнă-ши тата еплерех çĕрме пуян-ши хан? Çак ыйтусем çуралчĕç пуçра».

Тĕпчевçĕсем тĕшмĕртнĕ тăрăх – 15 тонна яхăн ылтăн пĕтернĕ палăк лартма. Енчен те скульптурăсем шалтан хăвăл пулнă пулсан – сахалтарах кайнă. Ылтăн Урта тилхепине Бату шăллĕ Берке тытсан – патшалăхăн çĕнĕ ертӳçи тепĕр шĕкĕр хула никĕслет. Ятне вара Сараях хăварать (арпашмалла ан пултăр тесе малтанхи тĕп хулана Сарай-Бату – Кивĕ Сарай, тепĕрне Сарай-Берке – Çĕнĕ Сарай теççĕ). Ылтăн лашасене те Берке хан çĕнĕ шĕкĕр хулана куçарттарать.

## Ылтăн лашасем «ураланни»

Ĕмĕре яхăн хулана илемлетсе тăнă ылтăн тулпарсем. Палăксен çил-тăвăл «пурнăçĕ» влаçа Мамай темен-пӳ (темник) килсен тытăнать. Мамай – Чингисхан юнĕнчен мар, вăл Бардибек ханăн кĕрӳшĕ. Сталинград çапăçăвĕнче чапа тухнă Мамай сăрчĕ – шăпах çак темен-пӳ ячĕпе. Шыв чăххи (кулик) хирĕнче 1380 çулта пулса иртнĕ çапăçу хыççăн Мамая тĕппипех çапса аркатаканĕ – Токтамыш хан. Вăрçа выляса янă темен-пӳ Крыма – Кафа хулине (халĕ Феодоси) тарать. Шăпа ăна шеллемест – часах сарăмсăр вилет çар пуçĕ тата Урта хуçи. Мамая генуйсем е Токтамыш çыннисем вĕлернĕ



тесе шухăшлаççĕ. Хавха тăрăх, чемен-пĕве Ахтуба тăрăхĕнчи сăртра чыслăн пытараççĕ, сума суса шăтăка Бату ханăн ылтăн лашине хураççĕ. Сăмахлăха ĕненес пулсан, Мамай паян кунччен те çавăнта çывăрать. Паллах, ку халап кăна. Токтамыш тăшманне çакнашкал чыс кăтартма пултарайман. Тепĕр сăмахвара Мамайăн вил тăпри пачах çук тесе ĕненетерет. Генуйсем чемен-пĕве тĕп тусан унăн вил ӳтне выçă сыснасене парса çитерсе янă пулать.

Тепĕр ылтăн тулпара та çак вăхăт тĕлнех – Шыв чăххи хирĕнчи çапăçу хыççăн вăрлаççĕ. Сăваптăш хаклă палăк çинчен илтнĕ казаксем пĕррехинче çĕрле Сарай-Беркене вирхĕнсе кĕреççĕ те хулана ярса илеççĕ. Уртасем тăна кĕриччен ылтăн ута никĕсĕнчен хăпăтаççĕ те лав çине тиеççĕ – вара часрах каялла тухса тараççĕ. Патшалăх сăваптăшне тавăрма хан çар ушкăнĕ ярать. Çапăçура казаксенчен пĕр çын та чĕрĕ юлмасть. Туртса илнĕ обозра вара ылтăн лаша тупăнмасть. Хăйсене хăвалама тытăнсан хурахсем Бату ханăн ылтăн тулпарне çырмара е кӳлĕре путарса пытарма ĕлкĕрнĕ тесе шутлаççĕ.

## Çĕнĕ «курăм»

Ылтăн лашасен хавхи тахçантанпах паллă. Хальхи вăхăтра унăн тытăмне майĕпен улăштарса пыни сисĕнет. Сарай-Беркерен лашана вăрласа тухакансем казаксем мар, ушкуйсем тесе çыратчĕç унччен. Дон казакĕсене те ушкуйсенчен пулса кайнă текенсем çукпа пĕрехчĕ (Дон казакĕсен хăш-пĕр ратнисем çеç ушкуйсенчен несĕленнĕ тенĕ хăйсем пирки). Шыв чăххи хирĕнчи 1380 çулхи çапăçăвăн шăпине казаксен отрячĕ татса панине те никам та «рекламăламан». Мĕн каласси, куç умĕнчех казаксен çĕнĕ историйĕ çырăнать. «Ирĕклĕ çуйăçсем» тĕрĕклĕх несĕл-тымарĕнчен хăтăлас шухăш тытни куçкĕрет.

Ушкуйсем Урта сăваптăшне хăçан вăрлама пултарнине вара юхан шыв хурахĕсен икĕ походĕнчен пĕринпе çыхăнтаратчĕç. 1360-1375 çулсенче ушкуйсем Атăлçие 8 поход ирттернĕ. 1374 çулта вĕсем Аслă Пăлхар хулине (виççĕмĕш хут) илнĕ. Вара Атăлпа аннă та Ахтубăпа кĕрсе Çĕнĕ Сарая та çитнĕ.

Хурахсен черетлĕ тапăнăвĕ 1375 çулта килнĕ. Прокоп тата Смолянин ертсе пыракан 1,5 пин ушкуй 70 кимĕпе похода тухнă ун чух. Кострома патĕнче вĕсем 5 пин çынлă Мускав çарне аркатса тăкаççĕ. Костромана тытса илнĕ хыççăн каллех Аслă Пăлхара анаççĕ. Хула çыннисем нухрат тӳленĕрен унта нумай тытăнса тăмаççĕ – Сарай-Беркене çул тытаççĕ. Урта тĕп хулине çаратнă хыççăн Аçтăрхана анаççĕ (Хазторокань), Каспи тинĕсĕпе Перс тăрăхĕсене те çитсе килмелле мар-и тесе те тĕв тăваççĕ. Аçтăрханта вĕсене Салчей хан хырçă парать, пысăк ĕçкĕ пуçтарать. Ушкуйсем ура çинче тăрайми пуличчен ĕçсе лартсан вĕсене вĕлерсе пĕтереççĕ.

Тĕшмĕртнĕ тăрăх – ылтăн лаша вăрлакан ушкуйсем 1374 çулхи похода иртерекенсем. Мĕншĕн тесен ылтăн лаша 1375 çулта Аçтăрханта «ишсе тухман». Сарай-Беркере тăлăха тăрса юлнă тепĕр ылтăн урхамах вара Мамай чемен-пӳ вăхăтĕнче çухалнă.

## Шырав малалла пырать

1990-мĕш çулсем вĕçĕнче пичетре Бату ханăн ылтăн лашисем пирки хыпар тухнăччĕ. Раççей ятарлă сехметлĕхĕ ылтăн урхамаха тупнă пулать. Мул-тупра темле хутор патĕнчи çырма тĕпĕнче выртнă имĕш. Ăнланмалла ĕнтĕ, казаксем пурăнакан хутор ятне асăнман. Чăнахах тупнă-и ылтăн лашана – халĕ те паллă мар, ятарлă сехметлĕх шăп, нимĕн те хыпарламасть.

Мул-тупра историйĕн тепĕр туратти – Пĕтĕм Раççейри наукăпа тĕпчев «Космошырав» пĕрлешĕвĕ. Çак пĕрлешĕвĕн Анат Атăл ушкăнĕн хастарĕсем 10 çул ĕнтĕ Бату ханăн хавхаллă ылтăн лашисене шыраççĕ. Тен, вăхăт сĕмлĕхĕнче мĕлкеленнĕ ылтăн тулпарсем самана авăрĕнче «ишсе те тухĕç».

**Ускатум КУНЦУЙ**

# «Тăван культура – Раççей культурин чĕрĕ тĕпренчĕкĕ» викторина

2014 çул Раççей аталанăвĕнче – культура çулталăкĕ. Çак ылтăн çӳпçери ĕмĕрсен мулне хăватлатнинче тăван халăх тӳпи те пысăк. «Самант» иртерекен викторинăра культура пĕлтерĕшĕ анлă, ăна сцена искусствипе çеç çыхăнтарма кирлĕ мар. Культура – чĕмĕш тата япалаш (духовное и материальное) пĕрлĕхĕ, шăранчăкĕ. Хастар тусĕсене журнал хăш-пĕр ыйтусене сӳтсе явма сĕнет. Хуравсем кĕтетпĕр! Пĕтĕмлетӳ – пуш уйăхĕнчи кăларăмра.

1. Шкул программинче Атăлçи Пăлхара вĕрентмеççĕ. Асăнсан та Юрий Долгорукий, Андрей Боголюбов, Всеволод Пысăк йăва кнеçсен похочĕсемпе аса илеççĕ. Ылтăн Урта патшалăхне йĕркелессине Бату хан Пăлхар улусĕнчен тытăнни, Уксах Тимур вара Ылтăн Уртана аркатма Пăлхар улусĕнчен пуçлани несĕлсен культурине мĕнле хаклаттарать?

2. Марко Поло тĕнче çул çӳревĕ çинчен пĕлетĕр пулĕ ĕнтĕ. Хăй вăхăтĕнче ăна ĕненмен – «Миллион суеçĕ» ят панă. Итальян сарчĕ (купси) мĕн курни-çырни пирки халĕ те тавлашма пăрахман-ха. Марко Поло аслă çул çӳреве тухиччене Атăлçи Пăлхар çинчен камран тĕплĕн пĕлнĕ?

3. Голливуд Атăлçи Пăлхар культурипе çыхăннă блокбастер та ӳкернĕ. Унăн ячĕ мĕнле? Историре чăн пулнă мĕнле ĕç-пуçа сăнлать вăл? Пăлхар сарчĕсен çурçĕр халапĕсене мĕнлерех çутатать?

4. Раççей культуринче хальхи саманари чи паллă çынсенчен пĕри – Михаил Ефремов. Чăваш культурипе епле çыхăннă вăл?

5. Игорь Николаев композитор тата юрăç пирĕн республикăна пĕлет-и?

6. Шупашкарта Павлов мичман урамĕ мĕншĕн пур?

7. Раççей культуринче çутă йĕр хăварнă ентешсен списокне (ятсарне) сĕнĕр.

КУЛЬТУРА çулĕ
Год КУЛЬТУРЫ

# Ирина Диарова: «Тăван халăхăн вăхăта тивĕçлĕн аталанмалла»

Канаш районĕнчи Маякра çуралса ÿснĕ Ирина Диаровăна «Самант» тусĕсем пĕлеççĕ ахăр: вăл наци телекуравĕнче «Илемпи урокĕсем» ярăма ертсе пырать. Раççей Геройĕ Н.В.Смирнов сержант ячĕллĕ Шупашкарти 33-мĕш шкулта чăваш чĕлхипе литературине вĕрентет. Унăн вĕренекенĕсем «Букварьтен илемлĕ литературăна çити» фестиваль-конкурсра кашни çулах палăратчĕç. Пĕлтĕр чÿк уйăхĕнче Мускавра çиччĕмĕш хут иртнĕ «Тăван чĕлхепе, çав шутра вырăс чĕлхипе, вĕрентекенсен ăсталăх сехечĕ» Пĕтĕм Раççей ăмăртăвĕнче 2-мĕш вырăна тивĕçрĕ пултаруллă учительница. Чăваш чĕлхипе литературине вĕрентекенсен ырă йăлине малалла тăсрĕ тесех хакламалла çак çĕнтерĕве. Вулакансене аса илтерер: Муркаш районĕнчи Калайкасси шкулĕнче вĕрентекен Александр Степанов та виçĕм çул триумфпа таврăннăччĕ тăван республикăна («Самант», 2012, №9). Çакна та пĕлтерер: Пĕтĕм Раççей мастер класне йĕркелекенĕ – Вĕренÿри наци проблемисене тĕпчекен институт, мероприяти хÿттине тытса пыракансем: Патшалăх Думин национальноçсен ĕçĕсен комитечĕ, Раççей Федерацийĕн Регионĕсен аталанăвĕн министерстви, Раççей халăхĕсен Ассамблейи, «Дрофа» издательство.

Вĕренекенсенчен урок ыйтма хăнăхнă Ирина-Илемпие хăйне журнал умĕнче хуравлаттарар-ха, «Самантăн» та пысăк «пиллĕк» лартса пама вăхăт âна.



**– Шупашкартан Мускава хăпармалли пусман картлашкисене асăнар пуль. Ыттисем те асра тытчăр, Раççей шайĕнчи мастер класне хутшăнма кăмăл туччăр.**

– Ака уйăхĕнче республика шайĕнче иртекен чăваш чĕлхипе литературине вĕрентекенсен ăмăртăвне хутшăнтăм. Çак пусăмра мала тухакан унччен Мускаври тупăшăва тивĕçетчĕ. Пĕлтĕр çак йĕркене улăштарчĕç: Раççей шайне лекес тесен малтан интернет-урок памалла. Жюри тÿрисене урок килĕшрĕ пулсан тин пусмапа çÿлелле хăпарма пулать. Тÿресем вара – Мускаври вĕренÿ аталанăвĕн федерацийĕн ĕçтешĕсем.

Манăн интернет-урока лайăх хакланă вĕсем, çу уйăхĕн вĕçĕнче Раççей шайĕнче тупăшăва хутшăнма ирĕк килчĕ. Пуçланчĕ вара хĕрÿ хатĕрленÿ! Çурла уйăхĕн вĕçĕ тĕлне досье ярса памалла, çĕнĕ урок калăпламалла, класс тулашĕнчи ĕçе тăратмалла, пичетленнĕ статья (е кĕнеке) хумалла, «Методика евĕрлĕхĕсем» эссе çырмалла. Ăмăртăвăн куçăмсăр майлă тапхăрĕ теççĕ çак хĕрÿ вăхăта. Мускаври жюри ман ĕçсене пăхса тухнă, каллех лайăх тесе хакланă. Вара тупăшăвăн тепĕр картлашкине хăпартăм – Раççей тĕп хулинчен йыхрав çитрĕ.

**– Мускав куççуле ĕненмест, мĕнпе ĕнентермелле терĕç аслă престол хулине?**

– «Манăн республика», «Манăн хула», «Манăн педагогика ĕçĕ-хĕлĕ» программăллă хăтлавсемпе (презентацисемпе) паллаштармалла, кĕскен, анчах та тĕплĕн каласа кăтартмалла. Курав та йĕркелемелле, 10 минутлăх видео-урок хатĕрлемелле.

**– Педагогика «акатуйĕн» картине тухнисемпе кĕскен паллаштар-ха.**

– Раççей шайĕнчи мастер класа пурĕ 60 çын хутшăнчĕ. Мускаври ăмăртăва вĕсенчен 24 вĕрентекене суйласа илнĕ. Тупăшăва Атăлçирен, Кавказ тăрăхĕнчен, Уралтан, Çĕпĕртен, Инçет Тухăçран – Раççей Федерацийĕн 19 субъектĕнчен пуçтарăнчĕç учительсем.

**– Конкурсăн пысăк лавне тиеме хăш вăхăтра ĕлкĕртĕн?**

– Вăхăт ытла хĕсмерĕ темелле – малтанах хатĕрленисем, усă курма юрăхлисем ал айĕнче пулнă ĕнтĕ. Тата пĕччен хатĕрленмен – наука ертÿçин тÿпи те пысăк. Чăваш Республикин Вĕренÿ институчĕн доценчĕ, филологи ăслайĕсен кандидачĕ Альбина Витальевна Волкова пулăшрĕ. Тĕлĕнмелле ăсчах вăл, сарлака ăслă-тăнлă, анлă кăмăллă, ун пеккисем республикăра сахал тесех çирĕплетме пултаратăп. Пытармастăп: Альбина Витальевна пулăшман пулсан – çĕнтерĕвĕн хÿрине те курса юлас çукчĕ.

**– Раççей тÿрисен «чĕн саламачĕ çунтарнине» еплерех тÿсрĕр?**

– Жюрире 9 çын, йышĕ вара улшăнуллă. Кашни кунах вĕсем ылмашăнса тăчĕç. Конкурсăн черетлĕ çаврăмне тÿресен çĕнĕ ушкăнĕ сÿтсе яврĕ. Жюри членĕсем пурте ырă кăмăллă, хавхалантаруллă. Ăмăртуçăсен пултарулăхне тĕрĕс хакларĕç, «пирĕннисем-сирĕннисем» тени пулмарĕ.

**– Мускав çулне Ирина Алексеевна халăхпах тухнă тенине илтнĕччĕ.**

– Педагогика университетĕнчи «Юр ай чечекĕ» фольклор ансамблĕ пычĕ манпа. Зинаида Козловăн çамрăк артисчĕсем презентацире халăха тĕлĕнтермеллипех тĕлĕнтерчĕç. Янравлă кĕвĕ-çемме илтсен лекцисенче ларакансем те чупса çитрĕç! Мухтанмасăр калатăп: «Браво!» – кăшкăрса пире çеç саламларĕç куракансем.

**– Курава мĕн тăратнăччĕ?**

– Тĕп экспозици – чăваш пуканисем. Çавăн пекех халăх тумтирĕпе, методика тĕрлĕ кăтартăвĕсемпе паллаштарни. Чӳк уйăхĕнче эпир Альбина Витальевнăпа кĕнеке кăларнăччĕ – ăна та тăратнă. Куравăн ытарĕ – 33-мĕш шкулта вĕренекенсем хăйсем ăсталанă япаласем, эрешсем, тĕрленĕ сĕтел тутрисем (салфеткăсем), ачасен ӳкерчĕкĕсем, хутран касса тата хуçлатса тунă илемĕшсем. Чăваш пылĕ те пулчĕ выставкăра!

**– Çынсене лекцисене те пăрахса тартнă хăтлав пирки кăшт тĕплĕнрех пĕлни пăсмасть.**

– Наци костюмĕн кăтартăвĕ пек иртрĕ презентаци. «Юр ай чечекĕ» фольклор ушкăнĕпе юрласа-саркалансах тухрăмăр çынсем умне. Тăван халăхăн виçĕ тĕп ушкăнĕпе паллаштартăм, уйрăмлăхĕсене палăртрăм. Тумтир юмлăхне-тĕнлĕхне – сакраллăхне кăтартрăм. «Пирĕн тум илемлĕ! Хитре ташă та – хӳхĕм çи-пуç пуянлăхĕ!» – тесех асăрхаттартăм. Ташласа-юрласах кăтартрăмăр вара. Жюри членĕсене чăваш хуплăвĕпе сăйларăм. Хăтлавăн 4-5 минучĕшĕн Мускава çити – 700 çухрăм ытла – фольклор ансамблĕ илсе килнинчен питĕ тĕлĕнчĕç тӳресем.

**– Ăмăртăва мар, Мускава хăнана кайнă пекех каласа паратăн.**

– Чăнах та, Раççей конкурсĕ – тĕлĕнмелле ăшă та тараватуяв. Мĕншĕн уяв тетĕп-ха? Савăклăх, кăмăллăх сывлăшĕпе сывлан унта. Вĕрентекенсем пурте хăйсен наци тумне тăхăнса килнĕ. Кашни хăйĕн халăхĕн чун ытарне кăтартма тăрăшрĕ. Çавăнпа конкурса уяв тесех хакламалла. Ăмăртуçăсем пĕр-пĕрне ăнăçу сунса тăчĕç.

**– Раççей шайĕнчи ăмăртăвăн кашни саманчĕ асра юлать – ăнланмалла. Çапах та тупăшу-уявра «йĕтес туртнине» палăртаятăн-и?**

– Раççей Патшалăх Думинче йĕркеленĕ «Раççей Федерацийĕн чĕлхе политики: паянхи лару-тăру тата пуласлăх» çавра сĕтеле хутшăннине палăртăттăм. Депутатсем пире саламлани, çĕнтерӳçĕсене парне пани те савăнтарчĕ – мĕн пытарасси, кăмăллă тухрĕ.

Эпĕ хула тата республика шайĕнчи конкурссене яланах хутшăннă. Опыт пур. Раççей шайне вара тухманччĕ-ха. Мускав питĕ шиклентерчĕ тесе каламастăп. Тĕп хулара пире Раççей Президенчĕ патĕнчи ЧР полномочиллĕ представителĕ Леонид Валерьевич Волков кĕтсе илчĕ. Çакă та кăмăла уçрĕ, конкурсра хастар пулма хистерĕ. Питĕ пысăк тав ăна.

**– Çĕнтерӳçĕсенчен чи маттурри кам пулчĕ?**

– Конкурс 7-мĕш хут иртрĕ терĕмĕр. «Кĕмĕл перо» гран-прие вара пĕрремĕш хут вырăс чĕлхипе литератури учителĕ тивĕçрĕ: Омск облаçĕнчен килнĕ Лариса Иващенко, ялти шкулта вĕрентекен. Лезгин чĕлхипе литературине вĕрентекен Шамсудин Магамдаров (Дагестан Республики) тата вырăс чĕлхипе литература учителĕ Мадина Ганжиева (Ингуш Республики) 1-мĕш вырăн йышăнчĕç. Манпа пĕрле 2-мĕш вырăна пушкăрт чĕлхипе литературине вĕрентекен Зульфия Баягулова, осетин чĕлхипе литературине вĕрентекен Ляна Гагиева тивĕçрĕç.





Малалла детектив еккипе кайăпăр. Ирина Диарова – вут-хĕм сапса тăракан пике. Шывра та путмасть, вутра та çунмасть, пур ĕçре те пултарать. Раççейре пысăк ăнăçу тунă Ирина-Илемпие тӳрĕ кăмăл йышăнăвне çыртарар-ха.

**Пĕрремĕш йышăну.** Раççей шайĕнчи тупăшура маншăн тутарсем, пушкăртсем, калмăксем чуна çывăхрах пулчĕç. Тутарла темиçе сăмах та вĕрентĕм Мускавра!

**Иккĕмĕш йышăну.** Эпĕ мĕн кăна юратмастăп пурнăçра! Вулама питĕ кăмăллатăп. Чи килĕшекен кĕнеке – «Ĕмĕр сакки сарлака». Юрлама-ташлама та хавас. Сцена пултарулăхĕ енĕпе ял клубĕ шайĕнчен иртсе кайнă ĕнтĕ. Хама профессионал теместĕп, çапах халăх умĕнче юрлас ĕмĕт те, кăмăл та пур.

**Виççĕмĕш йышăну.** Манăн яланах учитель пулас килнĕ. Хама урăх ĕçпе ĕçлекен çын пек шухăшлама та пултараймастăп. Урăх ĕçпе ĕçлеймен те пулăттăм – ку тĕрĕс.

**Тăваттăмĕш йышăну.** Вăрттăн шухăш-туйăм та пур манăн: шкул пурнăçĕн асамне путнăскере, ачасем те хама юратаççĕ пуль тетĕп. Чуна парса ĕçленине туяççех ĕнтĕ. Хулара чăваш чĕлхине вĕрентме çăмăл мар. Темле пулсан та – ачасемпе вăрçăнма тăрăшмастăп. Кашни ачан чунне ăнланма вĕренмелле. Нумайăшĕн ашшĕ-амăшне те паллатăп. Çыхăну та тытатпăр.

**– Çемьепе те паллаштарар вулакансене.**

– Эпир – виççĕн. Мăшăрăм Сергей ятлă. Вăл Елчĕк районĕнчи Шăмалакран, спортсмен. Чупассипе, йĕлтĕрпе тата велосипедпа ярăнса тупăшассипе ытларах тăрăшать. Хальхи вăхăтра Санкт-Петербургра ĕçлет. Пирĕн ывăла Федор тесе чĕнеççĕ, ятне аслашшĕне сума суса панă. Федя 4-мĕш класра вĕренет. Спортпа туслă – самбо секцине çӳрет. Çемье маншăн – пурнăç çуначĕ.

**– Тăван халăхăн чи пĕлтерĕшлĕ хакĕсен кĕске списокне туса пăхар-ха.**

– Чăн малта – тăван чĕлхе. Вара – юрри-ташши. Малалла – тĕрри, тумĕ, историйĕ. Ытти хаксем вара мĕнлисем – кашнин тĕнче курăмĕнчен, чунĕнчен килет. Эпĕ каланисем – никĕслисем.

**– Чăваш пурнăçĕнче кирлĕ хаксен шутне тата хăшĕсене кĕртен?**

– Архитектура евĕрлĕхĕ, халăх кун-çулĕпе çыхăннă мăнаçлă палăксем. Тăван çĕре юратма çĕнĕрен вĕренмелле – манса пыратпăр, мĕн пытарасси. Чăвашлăх тетпĕр, унăн культурине вара ӳстерместпĕр. Чăвашлăх – хамăр ял мар, паянхи пурнăçа тивĕçтермелли шай. Ачасене тăван чĕлхене юратма, хисеплеме вĕрентесси те уксахлать. Тĕрĕссипе, паянхине тивĕçтерекен хаксем те пит аталанмаççĕ Республикăра. Тĕп тĕллев вара – ыранхи куна юрăхлă ытар хаксене пурнăça кĕртесси. Эпир вăхăт ыйтăвĕнче ĕлкĕрсе пыраймастпăр. Çакă вара – хăрушă.

**Владимир СТЕПАНОВ** калаçнă

# Ĕмĕтри каччă: идеал тата кумир

**Кашни саманан хăйĕн паттăрĕсем теççĕ. Чăнахах-ши çакă? Ĕмĕре кура хĕрсем те каччăсем çине урăх куçпа пăхаççĕ тет. Ку та тĕрĕс-ши? Пурнан пурнăç улшăнни çын та урăхланнине пĕлтерет-ши? Асаннесен тапхăрĕнчи «юмахри» каччă сăнарĕ те ют-ши паянхи пикесемшĕн? Ыйткаласа пăхар-ха хĕр упраççенчен.**

**Кристина Ефимова (Тăвай районĕ):**



– Ĕмĕтри каччă?.. Мĕнлерех-ши вăл чăннипе? Кашни пикен хăйĕн ĕмĕт-сăнарĕ. Пурин кăмăлне те каякан «юмахри» йĕкĕт çук пуль тĕнчере. Юратнă савни паллах ыттисенчен чи лайăххи, унăн «плюсĕсемпе минусĕсем» те уйрăмтарах – чуна çывăхрах. Чунтан юратсан савнă çыннăн хăшпĕр çитменлĕхĕсене асăрхамастăн та.

Ĕмĕтри каччă – идеал – мĕнлерех-ши маншăн? Вăл шӳт ăсталăхĕпе палăртăр – кулăш туйăмĕсĕр çын питĕ кичем. Спортпа (ан тив, кăштах та пулин!) туслă пултăр. Сиенлĕ йăласемсĕр – эрех ан ĕçтĕр, пирус ан турттăр тата ытти те. Пĕчĕк ачасене юратакан каччăсем уйрăмах килĕшеççĕ мана. Çакăн пек йĕкĕтсем ырă кăмăллă та çепĕç чунлă пуль.

Вăхăт шунăçем çынна хакласси те улшăнать, çакна та йышăнмалла. Тăрмăш шкулĕнче эпĕ 3-мĕш класранпа вĕренетĕп. Кунта килсен мана пĕр арçын ача питĕ килĕшетчĕ – идеал пекех туйăнатчĕ. Хам та 10-ра кăна ун чух, мĕнле туйăмсем «вĕренĕ» чунра – чухламалла. Çав арçын ачана çитекен тек никам та çукчĕ маншăн. Виçĕ-тăватă çул çак туйăмсен тыткăнĕнче пурăнтăм. Халĕ вара çав каччă пур-и, çук-и – пурпĕрех: асăрхамастăп та ăна!

Хĕрсене çавăнпа ырă канаш парас тетĕп. Хĕр пĕрчисем, пĕрремĕш юрату тесе ытла ан çунăр, ан асапланăр, чунăра ан амантăр. «Юмахри» каччă урăххи те пулма пултарать. Ăна эсир пурнăçра пур пĕр тĕл пулатăр, тупатăр. Вара хăвăрăн пĕрремĕш юратăвăра – «çут тĕнчери чи хĕрӳллĕ те, чи асамлă туйăма» мансах каятăр.

**Александра Петрова (Шупашкар):**

– Ĕмĕтри каччă ансат çын: ырă кăмăллă, пирус туртмасть, эрех ĕçмест, спортпа туслă, типтерлĕ, ăслă-тăнлă, кулăш мĕнне чухлать. Анне сăмахнех илсе кăтартатăп: «Енчен те çыннăн пушмакĕ таса пулсан, вăл тирпейлĕ, лайăх çын». Хĕр упраçшăн Антон Чехов çыравçă тĕрĕс те кĕскен тахçанах каланă: «Çыннăн пурте илемлĕ пулмалла: тумтирĕ те, чун-чĕри те, калаçăвĕ те».



**Татьяна Савельева (Шупашкар):**

– Хăйĕншĕн идеал вырăнне пулмалли каччă пирки кашни хĕр пĕрчи шухăшлать. Анчах нумайăшĕ ĕмĕтри каччă пурнăçра мĕнлерех çын иккенне пит чухламаççĕ те. Маншăн идеал каччă лайăх кăмăллăхсен чун килĕшĕвĕпе палăрмалла. Çак кăмăллăхсене хуть те хăш саманари тата хуть те мĕнле халăх пикисем яланах хакланă та хаклаççĕ. Вĕсем: вăйхал, харсăрлăх, ăс-тăнлăх, яваплăх, чунлăх. Ĕмĕтри каччăн çав вăхăтрах çепĕç те çемçе кăмăллă пулмалла. Унăн савнишĕн, çынсемшĕн тăрăшмалла. Ыттисемшĕн мĕнле те, маншăн вара идеалăн сăн-сăпачĕ тĕп вырăнта мар. Йĕкĕтĕн ытар туйăм (вкус тени) пулмалла, вăл тумтир суйлама-тăхăнма пĕлтĕр, хăйне сăнаса-пăхса тăтăр. Тирпейлĕх тата чуна пыракан ăшă кулă – килĕшӳлĕхĕн



яланхи атрибучĕсем.

Воспитани, интеллект, тавра курăм та питĕ пĕлтерĕшлĕ. Вĕсемсĕр идеал каччă тени пушă сăмах çеç. Каччăн хĕрпе кăсăклăн калаçма пĕлмелле, кирлĕ чух сĕнӳ-канаш та пама пултармалла. Хаваслă-савăнăçлă, чунра вут чĕртекенни, ушкăна ертсе пыраканни – çак кăмăллăхсем те чысра.

Сĕмсĕрлĕх, ним уяманлăх вара йĕкĕтсене лайăхлатмаççĕ. Çавăнпа начар енсем те ĕнтĕ вĕсем. Эпĕ те ыттисем пекех: «Савни хӳттинче чул стена çирĕплĕхĕнчи пекех туятăп!» – тени – манăн çутă ĕмĕт.

**Александра Плотникова (Шупашкар):**

– Шупашкар каччăсемпе пуян. Нумай йĕкĕт юлашки çулсенче спортпа туслашнине, сывлăха çирĕплетекен йĕркене тытса пынине асăрхатăп. Питĕ савăнтарать ку.

Идеал пур маншăн – атте. Вăл чи лайăххи, вăйли, çепĕççи, ыр кăмăлли. Темле ĕçре те пулăшать. Çамрăк пулсан та, пурнăçра йывăр самантсем сиксе тухаççех, атте вара яланах тĕрек парать. Мĕн пытарасси, савни те атте манерлĕ пултăр тесе ĕмĕтленетĕп.

Тĕрĕссипе вара – идеал каччă çук тĕнчере, кашнийĕнех темле çитменлĕх тупăнатех. Ырă кăмăллă, тимлĕхлĕ йĕкĕтпе туслашас килет. Мана хисеплетĕр, çитĕнĕвĕсене ан пытартăр. Чунра начар тăк, хăй юнашар пулмасан та – кăмăла сипетлĕн тĕреклеттĕр.





Савнин мĕнле ҫитменлĕхне чӑтма пултаратӑп? Пирус туртнине чӑткалӑп пуль. Эрех ĕҫни пирки калаҫмастӑп та – пач кирлĕ мар. Хаярлӑха та тӳсме ҫук, усаллӑх тепĕр ҫынна кӳрентернине ҫаврӑнатех. Ултав – чи япӑххисенчен пĕри. Ӑҫта ултав – унта сана урӑх хĕрпе сутни.

Мана килĕшме пултаракан каччӑ – хӑмӑр куҫлӑ, хура ҫӳҫлĕ, ҫӳллĕскер, вӑтам ӳт-пĕвлĕ. Спортпа туслӑ йĕкĕтсем те кӑмӑла каяҫҫĕ, вĕсем темле лару-тӑрура та вӑй-халĕпе хӳйне те, сана та хӳтĕлеме пултараҫҫĕ.

Хӳйне мӑна хуракан, вĕҫкĕн, хĕрсенчен кулакан каччӑпа вара нихӑҫан сӑмахлас та ҫук. Сĕмсĕр те ӑшӑх кӑмӑллисем, аллине ирĕке яракансем те кирлĕ мар.

Ҫулсем хушӑнса пынӑ май идеал сӑнарĕ те улшӑнать пуль. Ҫавӑн пек туйӑнать. Тен, аслӑланнӑҫем ĕмĕтри каччӑна урӑхла йышӑнма тытӑнатӑп – кам пĕлет?

**Ирина Скудеева (Шупашкар):**

– Шупашкарта спортпа туслӑ йĕкĕтсем йышлансах пыраҫҫĕ – килĕ шетĕп Александра сӑмахĕпе. Эрех ĕҫесси, пирус туртасси те модӑран тухрĕ. Ирĕклĕ вӑхӑтра ҫамрӑксем спорт секцине е тренажер залне ҫӳрени вара лайӑх. Эпĕ пĕлекен каччӑсенчен сывлӑхлӑ пурнӑҫ йĕркине сахалашĕ кӑна хисеплемест (ҫук тесе калаймастӑп). Тем каласан та, ҫӑварне пирус хыпнӑ 16-18 ҫулхи каччӑсем сахалланчĕҫ урамра.

Идеал каччӑна кинора курма пулать. Фильмсенчи манӑн кумир – Зак Эфрон («Класлӑ мюзикл», «Чарли Сан-Клаудӑн иккĕллĕ пурнӑҫĕ», «Атте каллех 17-ре», «Телейлĕскер», «Хаҫатҫӑ» тата ыт.те). Зак геройĕсем спортпа туслӑ, сывлӑхлӑ. Юратнӑ ҫыннисемшĕн вĕсем тем тума та хатĕр. Идеал каччӑн чи кирлĕ енĕ – саншӑн тӑрӑшни, яланах пулӑшни.

Калаҫма кӑмӑллӑ нумай каччӑпа туслӑ эпĕ. Вĕсем шанчӑклӑ ҫынсем. Кирлĕ чухне пулӑшма кӑна мар, мухтаса ҫунатлантарма та пултараҫҫĕ! Ҫапах та чун кĕтни хальлĕхе тĕл пулмарĕ. Вӑхӑта унпа кӑна ирттерес килекен, кинона, кафене пĕрле ҫӳрекен йĕкĕтпе паллашас килет. Вӑл ырӑ та тулӑх кӑмӑллӑ пултӑр, хыт кукар кирлĕ мар. Паллах, эрех ĕҫмесен, пирус туртмасан лайӑх ĕнтĕ. Савни сывлӑхлӑ, спортпа туслӑ тӑк – сӑмах ҫук. Мӑн кӑмӑллӑ, хӳйне кӑна юратакан каччӑпа туслашма тур ан хуштӑр!

Камшӑн мĕнле те, маншӑн вара – каччӑн хĕртен ҫӳллĕрех пулмалла. Ытти кӑмӑллӑх «стандарчĕ» паллӑ: хӑюллӑ та харсӑр, тӳрĕ кӑмӑллӑ та таса. Манӑн тепĕр «ҫуррийĕ» чунпа та, ӳт-пĕвпе те вӑйлӑ тӑк – эпĕ те вӑйланатӑп.

**Редакцирен. Улшӑннӑ-ши эпир? Е ҫулсем иртнĕҫемĕн пурнӑҫ кирĕкĕ чуна ларать-и?**

**Ева ЦИАЛКОВСКАЯ** калаҫнӑ



**Zac Efron (USA):**
– Thank you!

















# Радиора ĕçлес ĕмĕтпе çунатланнă

Дмитрий Митяев чăваш наци радиовĕнче ертсе пыракан «Каçхи микс» кăларăм халăх кăмăлне тахçанах çĕнсе илнĕ. Аса илтеретпĕр: Дима Красноармейски районĕнчи Нимĕчкасси ялĕнче çуралнă. И.Н.Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университечĕн медицина факультетĕнчен хĕрлĕ дипломпа вĕренсе тухнă яш хăйĕн чун канăçĕвне чăваш наци радиовĕнче тупнă. «Каçхи микс» кăларăм рейтингĕ мĕнле пысăк пулнине унта килекен саламсенчен те пĕлме пулать. Республикăри мĕн тĕрлĕ ял ятне кăна илтме тӳр килмест пуль унта. Саламсен хыпарĕсем те нумай енлĕ: каччи хăйĕн хĕрне юратнине пĕлтерет, юлташĕ тусне экзаменсене ăнăçлă тытма сĕнет, тăванĕсем çывăх çыннисене çуралнă кунĕ ячĕпе саламлаççĕ. Саламсене Дима Митяев хăпартланулла та уçăмлă сасăпа чăвашла пĕлтерет. Наци радиовĕн «Каçхи микс» кăларăм пирки тĕплĕнрех пĕлес тесе хăйĕнпе тĕл пулса калаçрăм.




**– Дима, мĕншĕн эсĕ радиона кайма шут тытнă?**

– Эпĕ мĕн ачаранах калаçма, çынпа хутшăнма, юрă-кĕвĕ итлеме юратнă. Юрă-кĕвĕ манăн кăмăла çĕклетчĕ, пурнăçри йывăрлăхсене çĕнтерсе пыма тата çĕнĕ утăмсем тума вăй-хăват паратчĕ. Çавна пулах ĕнтĕ эпĕ аслă пĕлӳ илсессĕнех наци радиовне çул тытрăм.

Унтанпа 5 çул та иртсе кайрĕ ĕнтĕ. Кăларăма малтан эпир Ксения Алексинăпа иксĕмĕр ертсе пыраттăмăр. Программăна йĕркелесе янă вăхăтра çеç кунне 80 яхăн SMS килетчĕ, халĕ вара 120 ытла! Унсăр пуçне çынсенчен питĕ нумай шăнкăрав пулать. Май килнĕ таран чылайăшне тӳрĕ эфира кăларма тăрăшатпăр.

**– Эсĕ радиосăр пуçне чăваш телекуравĕнче «Республика – Çĕнĕ хыпарсем» ятлă кăларăм та ертсе пыратăн. Мĕнле вăхăт çитеретĕн?**

– Пĕлĕтрен нимĕн те ӳкмест – тăрăшмалла, ахаль çеç алă усса ларнипе, нăйкăшнипе нимĕн те тухмасть. Кашни çыннăн оптимист пулмалла, малашнехи пурнăç çине тăнăçлă пăхмалла, ӳркенмелле мар. Юлхавланмасан пĕтĕмпе йĕркеллех çаврăнать, пур çĕре те ĕлкерме пулать.

**– Час-часах радио итлекенсем: «Ах, мĕн тери лайăх çавăн сасси, чăвашла мĕн тери уçăмлă та хавхаланса ертсе пырать!» – тенине нумай çынран илтнĕ. Вăрттăнлăхĕ мĕнре-ши?**

– Ун пекех мар пулĕ, ӳстерсе калаççĕ ĕнтĕ. Радио маншăн чи малтанах – чун киленĕвĕ. Эпĕ мĕн ачаранпах радиора ĕçлес ĕмĕтпе пурăннă, пурнăçа унсăр курмастăп. Радио итлекенсемпе ялан ырă, ăшă кăмăлпа калаçма тăрăшатăп. Халăх мĕн ыйтнине çийĕнчех тивĕçтерме май çитерсен – телей.

Чăвашла уçăмлă та таса калаçасси атте-аннерен куçнă пулĕ. Тăван чĕлхене эпĕ питĕ хисеплетĕп, унпа мухтанатăп, ирĕклĕ, пĕр вăтанмасăр калаçма тăрăшатăп.

**– Радио итлекенсене, уйрăмах «Каçхи микс» кăмăллаканнисене, мĕн сĕннĕ пулăттăн?**

– Çамрăксем валли ток-шоу евĕр ятарлă кăларăмсем ытларах хатĕрлес килет. Передачăсене чăваш халăхĕн паллă çыннисене явăçтарсан аван пулмалла. Поэтсемпе писательсене, эстрада юрăçисене, учительсене тата тĕрлĕ сферăра палăрнă çынсене йыхравламалла. Вĕсене сăмах памалла.

Паянхи кун çамрăк ăрăва мĕн кăсăклантарать – çавăн пирки калаçмалла пирĕн. Çамрăксенче – пуласлăх, вĕсенче – вăй. Сăмах май каласан, çынсем пĕр-пĕрне сывлăх, ăнăçу тата телей суннине нимĕн те çитмест.

**– Радиора ĕçленĕ май эсĕ итлекенсен, кăларăмăн тус-тантăшĕсен мĕнле çитменлĕхĕсем пуррине асăрхаттарса хăварма пултаратăн?**

– Çынпа ĕçлесси – чи йывăрри. Кашни çыннăн хăйĕн кăмăлĕ, тавра курăмĕ, шухăшлавĕ. Чылай чухне «Каçхи микс» кăларăма шăнкăравласа çитекенсем радио эфирне ертсе пыракана илтми пулса пĕр чарăнми калаçаççĕ. Ку вăл начар ен мар паллах, калаçни вăл лайăх, анчах та передачăна ертсе пыракана та итлеме вĕренмелле, чăрмав кӳмелле мар.

Тата тепĕр çитменлĕхсенчен пĕри – портал çине саламлă SMS вĕçтернĕ хыççăн хăвăрăн ятăра çырма манса кайни. Ирĕксĕрех вара çав-çав номерпе вĕçленекен абонент çырса янă теме тивет.

**– Дима, пĕлнĕ тăрăх – эсĕ авланман. Тĕрĕсех-и?**

– Тĕрĕсех. Авланман-ха. Хамăн малтан ура çине тĕреклĕ тăмалла, ун хыççăн вара çемье çавăрма та пулать. Кашни япалан хăйĕн вăхăчĕ, кайран ӳкĕнмелле ан пултăр, çавă çеç. Авланасси – мунчана каясси мар!

**Алексей ТОРГОВЦЕВ**

# Телей тĕнчи инçетре-ши?

**Юрату – этем пурнăçне тĕпĕ-йĕрĕпех çаварса яракан туйăм. Хăшĕ-пĕри пĕрре курсах юрататъ, туйăмне ĕмĕр тăршшĕпе упрать. Тепри мĕн виличчен пĕрле пулăпăр тет те хăй сăмахне тепĕр куннех манса каять. Пурнăç çулĕ çине тăрса, ун авăрĕнче çаврăнса курман çамрăксене самаях асаплантарса шутлаттарать вăл. Çак туйăма пĕрремĕш хут тутанакансkерсем малашлăх пирки шутламаççĕ те. Чĕрисене вут хыпса илсенех паянхи кунпа пурăнса юлас теççĕ, яланах çапла пулас пек туйăнать вĕсене. Çак самантра йăлтах лайăх: çунатсăрах вĕçес, савнă çыншăн темĕн те тăвас килет. Чĕрере юрату туйăмĕ тапса тăрсан пурнăç илемлĕ вĕт-ха. Савнă çын çумĕнче пулас, калаçас, пур телей-савăнăçа унпа пайлас кăмăл тапса тăрать чунра. Хăш-пĕр хĕр 16-17 çулсенчех качча тухать. Мĕншĕн-ши? Нуша курма-и е çамрăклах телей тупатăп тесе-и? Хĕрарăм пулать те хисепне çухатать – темле айăпа кĕнĕ тейĕн.**



Чăрăшкассинче пурăнакан Смирновсен çемйи тăван хĕрне качча панă чухне пит савăнчĕ тесех калаймăн. Çĕнĕ кĕрĕве пит пĕлсех кайманран хĕрĕ мĕнлерех упăшка аллине лекет-ши тесе пăшăрханни те пулчĕ Лисукпа Макçăмăн. Никамăн та тăван тĕпренчĕкне нуша курма качча парас килмест.

Маринăна шăпа йĕркеллĕ ар çын парнелемерĕ. Пĕрлешиччен Костя ăна пĕр сивĕ сăмах та каласа курман, сассине те хăпартман. Çемье çавăрнă хыççăн вара упăшки кунран-кун улшăнса пычĕ. Малтан арăмне хĕр тантăшĕсемпе тĕл пулма ирĕк панă пулсан, халĕ вара алăк урлă та кăларасшăн пулмарĕ. Ун шухăшĕпе – хĕрарăмăн пĕрмай кил-тĕрĕшре тăрмашмалла: кĕпе-йĕм çумалла, кунне виçĕ хут апат пĕçермелле, выльăх пăхмалла. Ют ар çынсем куç хывасран хăраса Маринăна ĕçне те пăрахтарчĕ.

Çемьене çĕнĕ кайăк вĕçсе килсен йывăрлăхсем татах та нумайланчĕç. Арăмĕ вара çине-çинех  ача çуратрĕ. Костя çити-çитми пурнăçпа пурăнас мар тесе тепĕр ĕçе вырнаçрĕ. Кунĕн-çĕрĕн ĕçлекен ар çын килне çывăрма çеç килетчĕ. Ир пулсан каллех ĕçе тухса каятчĕ. Килте пĕр çын çеç ĕçленĕрен виçĕ ачана укçа çитерме йывăра лекрĕ Костьăна. Тен, çавăнпа та пулĕ çемьере пĕрмаях – харкашу. Ар çын килне час-часах ÿсĕр таврăнма тытăнчĕ. Арăмĕ çине алă çĕклеме пуçларĕ. Вăхăт иртнĕçемĕн упăшки эрех ăшнех путрĕ. Никама та тиркемест иккен «симĕс çĕлен». Ĕç тума пулăшать пулин те ытларах чухне вăл çемьене аркатать, юратакансен таса туйăмне «тутăхпа» хуплать.  Кун сиктермесĕр, пĕр чарăнми ĕçме пуçларĕ çемье пуçлăхĕ. Çавна пулах Костьăна ĕçрен кăларса ячĕç.  Ар çын тулашса, тарăхса  кăна тăчĕ. Марина кăвак куçпа çÿренине кÿршисем те асăрхама пуçларĕç. Ачисене те чышкă лектерме пуçласан хĕрарăм чунне хытарчĕ – упăшкинчен уйрăлма шутларĕ. Тĕпренчĕкĕсене нуша пурнăçпа пурăнтарас килмерĕ. Япалисене пуçтарса ашшĕпе амăшĕ патне тухса кайрĕ.

– Васкаса качча тухрăм çав, пулас мăшăрăма пĕлсе çитереймерĕм. Пурăнăçа, ĕмĕтсене такăнтарса  ура хурасса пĕлнĕ пулсан – ун енне çаврăнса та пăхас çукчĕ. Хамăн çамрăк ĕмĕре ăна парнелерĕм. Чăтрăм, тÿсрĕм. Юрас тесе кунĕн-çĕрĕн тарçă пек ĕçлерĕм. Мĕн хушнине йăлтах пурнăçларăм. Вăл вара итленине кура хисеплеме мар, кăшкăрмалли, вăрçăнмалли сăлтав çеç шыратчĕ. Ачамсене пĕччен ура çине тăратма йывăррине пĕлетĕп, анчах мăшкăла текех чăтаймарăм, – чунне уçса каласа пачĕ амăшне.

Çывăх çыннисем тĕпренчĕкне хĕрхенчĕç. Хĕрне качча панă чухне амăшĕн чĕри вырăнта марччĕ çав. Ахăртнех, темскер сиксе тухасса туйнă пулĕ. Чăн сăмахăн суйи çук...

Марина упăшкинчен уйрăм пурăнма тытăнсан чунне лăпкăлăх таврăнчĕ. Выльăх тухтăрĕ профессине алла илнĕскер тăван ялĕнчи фермăра çăмăллăнах ĕç тупрĕ. Халĕ виçĕ ача амăшĕ юратнă ĕçне кашни кунах кăмăлтан çÿрет.  Пĕррехинче Марина ĕçлекен вырăна Шупашкартан тĕрĕслеме килчĕç.  Еплерех кунта лару-тăру, мĕнле ĕçлесе пыраççĕ, оборудовани, им-çам  çителĕклĕ-и? Специалистпа  ферма заведующийĕ Марина ĕçлекен вырăна йĕри-тавра пăхса çаврăннă вăхăтра хĕрарăм хăйĕн  пÿлĕмĕнчен тухрĕ те тĕрĕслеме килнĕ ар çынна палласа илчĕ: унăн пĕрремĕш юратăвĕ – Миша!.

– Кĕтменччĕ эпĕ сана кунта тĕл пуласса, – терĕ Миша.

– Мĕншĕн апла калатăн? – тĕлĕнчĕ Марина.

– Эсĕ  качча кайнă тенине илтнĕччĕ.

– Тĕрĕс. Эпĕ чăннипех те  юратса качча тухрăм. Анчах та упăшкана тĕпĕ-йĕрĕпех пĕлсе çитереймерĕм пулмалла. Виçĕ ачана кун çути парнелерĕм. Укçа çитсе пыманран упăшка тулашма пуçларĕ. «Симĕс çĕленпе» туслашса кайрĕ. Мана çеç мар, ачамсене те хĕнеме именмерĕ. Чăтаймарăм, упăшкаран уйрăлтăм. Тăван киле, аттепе анне патне таврăнтăм, – куççульне шăла-шăла каласа пачĕ хĕрарăм.

– Йывăр шăпаллă пурнăçпа пурăннă иккен эсĕ. Халĕ вара малалла мĕн тăвасшăн?

–  Хам та пĕлместĕп, – терĕ Марина.

– Тен, эсĕ манпа пĕрле Шупашкара пыратăн? Эпĕ ĕçленĕ çĕрте, шăпах, выльăх тухтăрĕ кирлĕ. Укçине ялтинчен нумайрах ĕçлесе илеетĕн тата вăхăтра тÿлеççĕ. Ман патра пурăнма пултаратăн, хваттер пысăк, пÿлĕм пурин валли те çитет.  Ачусене шкула вырнаçтарма пулĕ. Канмалли кунсене ялта атте-аннепе пĕрле ирттерĕпĕр,– пĕлтерчĕ хăйĕн шухăшне пĕрремĕш юратăвĕ.

Маринăн ашшĕпе амăшĕ Миша лайăх каччă пулнине малтанах пĕлнĕ. Вĕсем пĕртен пĕр хĕрне шăпах ăна качча пама ĕмĕтленнĕ пулнă. Анчах та Марина ун чухне тĕрĕс мар çул суйласа илчĕ. Чавса çывăх та çыртаймăн тесе ахальтен каламан пулĕ çав. Халĕ вара çамрăк хĕрарăм хăйĕн пурнăçне тĕпренех улăштарас терĕ. Нумай пуç çĕмĕрмерĕ – Мишăпа хулана тухса кайрĕ...

Хĕрпе каччă çемье çаварса пĕр-пĕрне яланах чунтан савса пурăнни, кÿрентерменни тата кÿрентерме паманни, ĕмĕре туслăн ирттерни – пархатарлă, таса, чăн-чăн юрату. «Телей тĕнчи инçетре», – теççĕ аслăраххисем. Ăна хамăрсăр пуçне никам та çывăхлатмĕ.

**Рената ВОЛКОВА**

# Начарланма пулăшакан Кампур



Хĕлле стройкăра ĕçлеме çăмăл мар, апла пулин те сивĕ çанталăкрах куллен кăштăртататпăр. Юр вăйлă çунăран паян ĕçе те вăхăтра çитеймерĕм. Мĕн тăвăн, троллейбусĕсем тимĕр шапа пек аран йăраланса пыраççĕ-çке.

Тумтире улăштарса тăхăнмалли пӳлĕме кĕрсен тĕкĕр умĕнче Валя киленсе тăнине курах кайрăм.

– Лисук, паян хама питĕ тарăхрăм-ха. Курайми те пултăм. Чăнах! – терĕ çӳçне якатнă май.

– Мĕн тата? Ура пӳрнине хуçмарăн пулĕ те? – ыйту патăм хайхискере аптăранă енне.

– Санăн ялан шăл йĕресси, хăçан та пулин çынна ăнланма пултарăн-ши эсĕ? Çине тăрса начарланмалла манăн. Ак халь тĕкĕр çине пăхрăм та, хăраса кайрăм. Витене самăртма хупнă сысна пекех эп капла. Çĕр кило та туртатăп пулĕ ахăртнех. Паянтан апат çиме пăрахатăп, курса тăр, – сăмахларĕ шухăша путса.

Алă султăм та ĕçлеме тухса кайрăм. Тĕлĕнмелле. Паян никам та сăмах вакламасть. Пурте шухăша кайса штукатурка якатаççĕ. Кăнтăр апачĕ çитсен сĕтел хушшине ларса килтен кам мĕн илсе килнĕ – çавăнпа апатланма тытăнтăмăр. Валя çеç эп паянтан çиме пăрахатăп тесе çаплипех пуçне çĕклемесĕр, тар юхтарса ĕçлерĕ. Каçхине те чей ĕçме килĕшмерĕ.

Çапла пирĕн Валя виçĕ кун ăш-чикне пĕр тĕпренчĕк те ямарĕ. Эрне кун вара тĕлĕнтермеллипех тĕлĕнтерчĕ. Сăмахне çиллпе вĕçтерсе ячĕ курăнать: нихăçан курманла çиме тытăнчĕ. Яланхиллех ĕнтĕ! Кăнтăрла пĕр литр яшкасăр пуçне пĕр литр какайлă шаркку авăстарчĕ. Чейпе ĕçме тесе столовăйĕнчен кукăль-пӳремеч илсе килчĕ. Ах, вĕсене те çăвар тулли юратса чăмларĕ. Эпир кулкаланине курсан çав тери тарăхрĕ.

– Сире мĕн ĕç! Хампа хам хуçа, çавăнпа та эсир ман пирки мĕн шутлани – маншăн ик айкки те тăвайкки, – терĕ кӳренӳллĕн.

...Вăл кунхине туссемпе вăрмана шашлăка кайрăмăр. Валя та кăмăлпах пычĕ.

– Какай юрататăп эпĕ, уйрăмах нăрик-нăрик какайне, – терĕ пике хĕрелнĕ пит çăмартисене кăмăллăн сăтăркаласа.

Ах, таврана мĕн тери тутлă шăршă сарăлчĕ! Хырăм пушшех выçса кайрĕ. Хавассăн хыпаланса сĕтел çине çăкăр касса хутăмăр. Акă пиçрĕ пирĕн шашлăк! Пысăк чашăка какай хунă чух хăрăк турат пуçтаракан Петя чуна пырса тивмелле кăшкăрса ячĕ:

– Эй, туссем, тарăр! Çăлăнăр!

Çаврăнса пăхрăм та, алăри чашăк та юр çине шăкăрт çеç тухса ӳкрĕ. Пирĕн паталла кĕрт йыттисем вирхĕнсе килнине курсан, тупата, чĕре ура тупанĕнчен тухса тарчĕ ахăртнех. Унтан пĕтĕм вăя пуçтарса çывăхра ларакан йывăç патне ыткăнтăмăр. Куç хупса иличчен Вика, Катя, Надя, Алина çӳлелле упăтесемле хăпарса та кайрăмăр. Валя вара туллискер, тем пек тапаçлансан та, пирĕнпе тан пулаймарĕ. Туратсенчен тытăнса çӳлелле ăнталать-ха, анчах унăн йывăрăшне лешсем чăтаймаççĕ – хуçăлаççĕ. Çынна инкекре пăрахма юраманнине шута илсе хайхискере алă парса хăпартас терĕм. Ярса тытрĕ те – хăй кӳлепипе аялалла сĕтĕрсе антарчĕ мана. Ай, тарăхмаллипех тарăхрăм! Вăхăта сая ямалла маррине асра тытса Вальăна хăвăртрах пулăшса-тĕртсе çӳлелле хăпарма пулăшрăм, хыççăн хам пакша пек сиккелесе вăшт çеç ун çумне вырнаçрăм.

Хайхи йытăсем пĕр-пĕринпе туллашса пирĕн шашлăка çиеççĕ. Типĕтнĕ пулла та тиркемерĕç курăнать çав... Сĕтел тавра мĕн пуррине йăлтах шăршласа-тĕрĕслесе тухрĕç. Унтан пĕри эпир улăхса ларнă йывăç тĕлне пычĕ те шурĕ шăлĕсене кăтартса хăрлатрĕ. Вара талпăнса вĕрме тытăнчĕ.

– Лисук, тавах. Мана вăхăтра пулăшу паман тăк çак ăçтиçукăн çăварне лекеттĕм вĕт-ха – çыртса илетчех. Никама та айăпламан пулăттăм. Хама çеç вăрçаттăм. Ара, эпĕ тулли кĕлеткеллĕ çын пулнишĕн кам айăплă? – терĕ Валя чарăлнă куçĕсемпе ман еннелле пăхса.

Çак пăтăрмах хыççăн пике апат суйласа çиме тытăнчĕ. Çăкăр, кăлпасси, какай пач та ас тивмест. Купăстапа хĕрлĕ кăшман салачĕ кăна çиет. Тепĕр чух тăварсăр хура тулă пăттине тутанкалать.

Чăн та, виçĕ эрнере Валя чиперленчĕ. Пилĕкĕ те кăшт курăнса пуçларĕ, тĕкĕр умне пырса шӳтлеме те тытăнчĕ.

– Ай, хăва хулли пек çинçе пилĕке пăхса ытараймастăп, – тет ир те, каç та хавхаланса.

Пĕр уйăх иртсен йăлтах улшăнчĕ пирĕн ĕçтеш. Кивĕ тумĕсене пăрахăçа кăларса çĕннисем туянма тытăнчĕ. Ара, малтанхисем шалпар пулса юлчĕç-çке! Авă вĕрсе хăпартнă пек пит çăмартийĕсем те вырăна ларчĕç, хĕсĕк куçĕ те пысăкланса илемленчĕ. Ах, сăмсине темпе танлаштармалла ĕнтĕ тата...

– Лисук, пĕлетĕн-и, паян каçпа сан пата парнепе пыратăп, килтех пулатăн-и? – юнашар пырса ларчĕ пĕр кунхине Валя кăнтăр вăхăтĕнче.

– Мĕн ячĕпе савăнтарасшăн вара эсĕ? Çуралнă кун та мар-çке, – терĕм ним ăнланаймасăр.

– Янăрашса ан лар-ха, ара, уйăх каялла мана шашлăка чĕнмен пулсан, çав вырăна ăнсăртран-кĕмсĕрт йытăсем килмен пулсан... эпĕ унчченхи пекех çĕр çийĕн слон пек пускаласа çӳренĕ пулăттăм. Эсир мана начарланма пулăшрăр, тавах. Кампура та çĕре çити пуç тайса тав сăмахĕ калатăп. Çав йытта та халь тесен халь сысна пĕççипе хăналама хатĕр, – терĕ те каллех тĕкĕр умне пырса хăй кĕлеткипе киленсе тăчĕ.

**Петĕр ЛИСУКĔ**

# Эксперимент



Пěрремěш юрату ěмěрлěхех асра юлать теççě. Юрату вара мěн-ши вăл? Мěншěн вăл иксĕлми телей те, тарăн суранлă ырату та илсе килет?
Чылай ăсчах юратăва чир тесе йышăнать... Çын минренě пекех тытать хăйне – наркоман тейěн. Савнийěпеле яланах юнашар пулас килет унăн. Хěрÿ туйăм чи нумайии те 3 çул çеç çунать тесе çирěплетеççě ăсчахсем. Хăратать вěсен вердикчě. Кайран вара? Кайран вара çынна хăнăхни çеç тет иккен. Çулăмлă юратăвăн хěрÿ хěвелě çунтарса типěтнě пуш хирти пурнăç...
Пěве кěре пуçласан, 12 тултарсан, эпě, ытти хěр ачасем пекех ěнтě, акăш-макăш чаплă туй, çěрме пуян упăшка, темěн пысăкăш çурт пирки ěмěтленеттěм. Патша ывăлěпе тěл пуласси пирки пит шухăшламан, Шупашкар юмах тěнчи маррине ăнланнă. Патша ывăлěпе тěл пулма шăпа ниепле те пÿрменнипе, хам та патша хěрě пулманнипе вăрттăн куляннă та пуль. Пысăкланнăçемěн шухăшсем кăштах улшăнчěç пулин те ěмěтри пуян каччăпа тěл пулассине шанни пěтмерě.

2012 çулта, пуш уйăхěнче, троллейбусра пěр çамрăкпа паллашрăм. Ěç-пуç çаплараx пулса тухрě. Гипермаркетран темěн пысăкăш сумкăсемпе киле таврăнма тухрăм. Çěклем айне путнăскер троллейбуса кěтěм. Ура çинче тăрса пěр чарăну кайрăм. Ман умра ларса пыракан каччă çěкленчě те: «Хěр упраç, сире сумкăсемпе тăма йывăр пуль, ларăр çакăнта», – терě. Кайран вара мана киле çити ăсатма та пычě – сумкăсене çěклеме пулăшрě. Çакăн пек паллашрăмăр эпир, телефон номерěсене илтěмěр.
Тепěр кунне тěл пултăмăр, урампа утрăмăр, пирěн капăр хула тата илемлěрех туйăнчě шăкăлтатса пынă май. Чапаев скверěнче çÿрени вара уйрăмах кăмăла кайрě. Çěнě пěлěш Петя ятлă, ун чухне вăл 17 кăна тултарнăччě. Каччă савăк кăмăллă, сăпайлă туйăнчě мана, сăнěпе те пăхма аптрамастчě. Голливуд актерě пекех мар ěнтě – кăмăллă, уçă сăн-питлě каччă.
Çур сехет уçăлса çÿренě хыççăн ăна ěмěр тăршшěпех паллана-пěлнě туйăм çуралчě. Тахçанхи туссем пекех пуплешме тытăнтăмăр. Уйрăлаймастпăр пěр-пěринчен. Чылай, 5 сехете яхăнах, çÿрерěмěр хула урамěсемпе. Петя калаçма мěнле лайăх пěлет. Хам та сăмахлама пултаракан хěр-ха ěнтě, чěлхе-çăвар енчен катăк мар.
Уйрăлнă чухне хамăр иксěмěр те йěпе чăх чěпписем пекехчě. Пăрсан – тумтиртен шыв юхать. Мěн тăвăн, кăмăл савăкран сисмерěмěр те – ачалăха таврăнтăмăр. Юр чăмăрккисемпе пеме тытăнтăмăр, выляса пěр-пěрне юр çинче йăвалантартăмăр. Вăл ěнтě юри парăнатчě, «хěн» ытларах тÿсетчě. Ку та мана питě килěшрě. Йěп-йěпе пуличченех айкашса çÿрерěмěр çапла.
Çакăнтанпа пирěн туслăх пуçланчě. Шăнкăравлаттăмăр, тěл пулаттăмăр, калаçаттăмăр. Юлташла тейěпěр, ахаль туслăх ěнтě. Тепěр 6 уйăхран мана Петя савнисем пек тěл пулма сěнчě. Сăпайлă, ăшă сăмахсем чуна ирěлтерчěç. Тěл пулсан ман савни мěнле илемлě тытрě хăйне – галантлă кавалер. Сисмерěмěр те – ěç-пуç туйăмлă юрату патнех çитрě. Хитре лару-тăру, тимлě те çепěç савни: «Çук!» – тесе калама чěлхе те çаврăнмарě, асра та пулмарě.
Эпир пěрле пулни часах 2 çул çитет. Ăсчахсем мěн калани асран тухмасть. Наука çирěплетнě тăрăх, тепěр çултан пирěн юрату сÿнмелле! Юратăвăн савăкě, асамě нивушлě таçта кайса çухалать?
Хěр упраçсем тěлěнеççě те пуль: мана нимěнле парне те кирлě мар Петьăран. Тăван чун юнашар пулни – çут тěнчере чи лайăххи, чи кирли.
Акă мěн каласшăн хěрсене. Сире пурне те юрату асамě çиттěр. Юратăвăн сукмакне пěлме çук, вăл кашни мăшăрăн урăхлараx килсе тухма пултарать. Туйăмсем, кěтречě вара пěрре. Аслă тěнчере хăвăн чунна тăван, кăмăлна пуянлатакан, шухăшсене анлăлатакан çынпа тěл пулни – телей. Телейлě юрату сунатăп пурне те!
Ăсчахсем вара тем йăнăшнă пек туйăнать. Тепěр çултан нивушлě сивěнетпěр те пěр-пěринчен – уйрăлатпăр Петьăпа? Наука чăнлăхне тěрěслеме ирěксěрех эксперимент лартма тивет пирěн. Çěнě, 2015 çула, пěрле кěтсе илěпěр-ши е урăх юлташ-пěлěшсемпе пулăпăр?

*Редакцирен:* Пěрремěш юрату – ěмěрлěхе асра юлакан пурнăç юмахě. Ăна çын тěнчене тепěр хут çуралнипех танлаштараççě хăшěсем. Пěрремěш юратăвăн кěтречěпе çыхăннă, ăна «чěртсе» яракан шăрпăк мěнле хыпса илнине кăтартакан историсемпе паллаштарасшăн «Самант». Журнал тусěсем те «вут хурасса» шанатпăр.



# Кивӗ Ҫӗнӗ ҫул

Алăка уҫнă-уҫман темĕскер сиксе ӳкрĕ – хăрушăскер, ҫăмламасскер. Йынăшса-мĕкĕрсе ҫупăрласа-хĕссе лартрĕ. Ним ăнланман, ҫухалса-шикленсе кайнă Ванюк сиссе те ĕлкĕреймерĕ – сирпĕнсе те анчĕ. Пуҫĕпе урайне шаплатсан куҫĕнчен ҫиҫĕм ҫиҫрĕ, маччана шăтарса пĕлĕте ҫити ҫулăм вирхĕнсе тухса кайрĕ. Тин ăнланчĕ Пурăшкасси джентльменĕ: кĕрĕке тӳнтер тавăрса тăхăннă Ҫеруш хăтланăшĕ ку. Ҫавăнпа телефонпа часрах кил тесе кăшкăрашрĕ: аллине хытах каснă тет. Юн юхма чарăнмасть – часрах пулăш тесе суйрĕ. Ырă кăмăллă, сăпайлă, пуриншĕн те тĕслĕхлĕ, чăтма ҫук тĕрĕс сипетлĕ Ванюк Шерлок Холмс* ятне ямасть ĕнтĕ. Тусне – Пурăшкассин тепĕр джентльменне Ватсон тухтăра – вилĕмрен хăтарма чупса та ҫитрĕ. Лайăх кĕтсе илчĕ ăна кĕлеткинче юлашки юн тумламĕ те юлман, Ҫĕнĕ ҫулта ҫĕнĕ «инвалид» пулса тăнă юлташĕ.

– Мĕнле пек? Каҫпа хăратма тухатпăр-и? Уу-у! Ыран шкула каймалла, паян вара юлашки каҫ канатпăр! – мĕкĕрсе ячĕ пулла кайса Пурăш ҫырминчех вунă метр вăрăмăш акула тытма пултарнăн ҫиҫсе тăракан Ҫеруш тус.

– Уртаракан им ĕҫмен-и эс?

– Мĕскер-мĕскер?

– Психбольницăна илсе каймалла мар-и? Ҫамрăк пуҫпах унта лекни – шалккă. Саккăрмĕш класс та вĕренсе пĕтерейменĕн. Ăраскал... Шăпа... Аминь...

– Паян Кивĕ Ҫĕнĕ ҫул! Ĕретлĕ ҫамрăксем, сан пек чунпа ватăлса пĕкĕрĕлсе ларманнисем, кĕҫĕр сваткене тухаҫҫĕ! Хăратмалли каҫ!

– Вара?

– Разведка питĕ вăрттăн мĕн пĕлтернине калас-и?

– Ан кала.

– Итле! Ритăн ашшĕпе амăшĕ Шупашкара хăнана вĕҫтерчĕҫ – хам куртăм. Кĕҫĕр Ритăна хăратма каятпăр! Лайăх кăна вĕрентсе илетпĕр. Ну йăлăхтарса ҫитерчĕ вăл мана, икĕ чĕрĕк вĕрентĕмĕр – чуна тăпăлтарсах кăларса илчĕ. Тупăннă тет класс старости!

– Сана мĕн усал тунă Рита? Ҫеруш тесе йăпăлтатса кăна ҫӳрет сан тавра. Мана вара...

– Ия, Холмс! Ия ҫав! Сана та, мана та ялан ăс вĕрентет. Директор ҫумĕ пулса тăнă тейĕн.

Туссем хăрушă тавăру планне сӳтсе явма тытăнчĕҫ. Хăранипе сирпĕнсе-чикеленсе кайнă Ритăна васкавлăн тăна кĕртме нашатырь спирчĕ чикмеллине те манмарĕҫ.

– Ватсон, кун пек тискеррĕн хăтланмастпăр. Эпир – джентльменсем. Нихăҫан та манса ан кай ҫакна. Хамăр пырасса Ритăна малтанах пĕлтерсе хуратпăр.

– Стратеги мĕнне чухламан ҫынпа калаҫни мĕн усси! Кĕтменлĕх факторĕ ҫинчен илтнĕ-и эс?

– Пирĕн хамăрăн реноме. Эпир – джентльменсем! Ватсон, Пурăшкасси – тĕтреллĕ-ҫумăрлă Лондонăн хĕвеллĕ филиалĕ.

Ҫеруш трактор гусеници айне лекнĕ лум пекех кутăнлашрĕ пулин те, Ванюк лума хирĕҫ те меслет пуррине ҫирĕплетсе пачĕ-пачех.

– Миледи, сире Кивĕ Ҫĕнĕ ҫулпа саламлама юратчĕ-ши? Ирĕк парсассăн, – пылпа ҫу кӳллине пырса лекнĕ ылтăн пулă юррипе юмăҫтарчĕ Ванюк телефонĕ Ритăн уҫă сассипе «Алло!» тесе чĕлхине уҫсан.

– Тархасшăн, милорд!

– Чун-чĕререн саламлатпăр сире! Ырлăх-сывлăх сунатпăр. Ял ҫĕклейми телей!

– Тавтапуҫ, сэр. Куҫҫуль тухса кайрĕ! – нăш-нăш туса илчĕ Рита.

– Миледи, каникулта пĕр вăхăт курăнмарăр. Эсир иртсе ҫӳременрен пирĕн Пикадилли касси тунсăх ăшне путрĕ.

– Аппа патне Шупашкара кайса килтĕм.

– Шеллетпĕр мĕскĕн хĕр пĕрчине. Чемпион тыткăнĕнчен тĕрĕс-тĕкелех ҫаврăнса таврăннишĕн пур халăхпа савăннине те пĕлтеретпĕр.

– Сэр, сирĕн ырă кăмăлăра пула ҫут тĕнче тата ҫутăрах!

Рита аппăшĕ – Амазонка Люда, пушар каланчи пек ҫӳллĕскер – студентка. Шкулта вĕреннĕ чухне ăна районĕпе паллатчĕҫ, халĕ Шупашкарĕпех пĕлеҫҫĕ. Шкул директорĕн Михалыванчăн чи юратнă вĕренекенĕччĕ вăл. Пĕчĕкренпех самбо секцине ҫӳренĕ те аслă классенче район чемпионки пулса тăчĕ. Йĕкĕтсене те шушкăласа илетчĕ харсăр пике. Халĕ Шупашкарта ҫĕнтерӳ хыҫҫăн ҫĕнтерӳ туптать. Олимп чемпионĕ пулмасан та – Раҫҫей тата Европа ҫĕнтерӳҫи чысне тивĕҫетех вăл.

Турра шĕкĕр, Рита аппăшĕн ҫулĕпе кайман, атту пулсан пĕтнĕччĕ пурнăҫ – шкула кайма та хăрамаллаччĕ. Йăмăкĕ аппăшне хывманшăн икĕ кубла метр мыщцă йăтса ҫӳрекен Михалыванч вара чĕререн хурланнине пытармасть. Ванюкпа Ҫеруша та хăйĕн самбо секцине питĕ ҫураҫрĕ спорт мастерĕ-директор. Джентльменсем пурпĕр йĕлтĕрпе чупассине сутмарĕҫ. Физкультура учителĕ ҫакăншăн тортпах сăйларĕ парăннă чĕресене те шанчăклă чунсене. Каникул умĕн Ванюкпа Ҫеруш акар-йĕлтĕрҫĕсем район ăмăртăвĕнче 1-мĕшпе 2-мĕш вырăнсене йышăнчĕҫ. Ҫĕнтерӳшĕн савăннăран хĕрсем хушшинче йĕлтĕр акартинче Рита мала тухнине те чиперех чăтса ирттерчĕҫ.

– Миледи, сирĕн пата кĕҫĕр – Кивĕ Ҫĕнĕ ҫул каҫ – арҫурирен те урăм-сурăмтарах, хурах Шăпчăкран та усалтарах вăрман тискерĕшĕсем – икĕ чăкарми ҫитеҫҫĕ, – сассине хытарчĕ Ванюк. – Хырçă тӳлемесен – тухатласа хума пултараҫҫĕ. Куланая пĕремĕк-канфетпа илеҫҫĕ, асра тыт! Урамра ҫĕр чĕтретсе кăшкăрнине илтсенех – алăксене уҫса хунă пултăр. Унсăрăн чӳрече витĕр ҫĕмĕрсе кĕрсе кайĕҫ! Тем те кĕтме пулать вĕсенчен. Ăнлантăн-и?

– Тавтапуҫ, милорд, асăрхаттарнăшăн! Ясак тӳлесе татма халех лавккана чупатăп!

– Вĕрен, Ватсон тетӳрен – Шерлок Холмсран. Ҫынсем тĕлĕнсе: «Кам вĕрентрĕ?» – тесе ыйтсан – «Никам та! Хамах пĕлетĕп», – тесе хуравла. Куҫна та ан мăчлаттар, – Михалыванч сассипех каласа хучĕ Ванюк. Артист!

Каҫ пулсан Ванюкпа Ҫеруш кĕрĕксене тавăрса тăхăнчĕҫ. Пӳрт маччи ҫинче тахҫантанпах йăваланса выртакан, шăхличĕсене ҫурри ытла кăларса пĕтернĕ хут купăса илсе анчĕҫ – туртсан нăйлатса халăҫ ытла тăсăлать. Чăкармисене тивĕҫ инструмент! Ритăсен тĕлне ҫитсен джентльменсем питне-куҫне хура чăлха тăхăнчĕҫ те чăкарми оперине пуҫларĕҫ. Пыр тĕпĕпе хăрлатнăран ӳсĕре-ӳсĕре илчĕҫ пулин те тискер мĕкĕрӳ Пурăшкасси вăрманне ҫеҫ мар, Африка саваннине те тивĕҫтермелле пулса тухрĕ. Юрать нумай мĕкĕрме тивмерĕ, атту чыхăнсах вилетчĕҫ пуль туссем. Рита чупса тухса алкум алăкне уҫса та хучĕ.

– Малалла та юрăпа! – аллинчи куланай хутаҫҫине ҫар ялавĕ вырăнне вĕлкĕштерчĕ Ванюк. Ҫеруш вăрăм туна сассиллĕ хут купăсне урам сарлакăш туртса карăнтарчĕ.

Хăр-хар хăрлатса, тымарĕ-масарĕ тăпăлтарса кăларнă тунката ташшине кĕрĕс-мерĕс хуҫкаланса тискерĕшсем хырçă пуҫтарма кĕчĕҫ. Алкум картлашкипе хăпарчĕҫ ҫеҫ – ҫутă сӳнсе те ларчĕ. Пӳрт алăкне хыпашласа тупрĕҫ те ҫăмламас носорога чĕррĕн ярса илме сунара тухнă неандерталецсемле кăшкăрса шалалла вирхĕнчĕҫ. Алăк урати урлă сиксе каҫнă Ванюк таҫта аялалла вĕҫсе аннă май ури айĕнче нимĕн те пулманнине, пушлăха ярса пуснине ăнланса ĕлкĕрчĕ-ĕлкĕрчех. Хыҫран пыракан Ҫерушăн хăватлăн мĕкĕревĕ симĕс шăна нăйлатăвне куҫрĕ – тăсăлса

---

*Ванюкпа Ҫеруша мĕншĕн Шерлок Холмспа Ватсон тухтăр тенине "Самантăн" 2012 ҫулхи пуш уйăхĕн номерĕнче "Серванозавр" калавра вуласа пĕлĕр.

ӳкнӗ Холмс ҫинех ҫӳлтен сирпӗнсе анчӗ Ватсон. Хут купăс та сехре хăпнăн нăриклетсе илчӗ.

Рита тӗпсакай хăмисене уҫса хунă! Унччен те пулмарӗ тӗттӗм кӗтесре куҫӗсенчен ҫутă сирпӗтекен пуҫ шăмми ялтăраса та кайрӗ. Шарт сикрӗҫ вăрман тискерӗшӗсем. Хăйсем арҫурирен те усалтарах чăкармисем пулнине те туххăм манса кайрӗҫ. «Ах, хаспати...» – сăрхăнса тухрӗ Ҫерушăн, чутах хӗрес хывма тытăнмарӗ мӗскӗн.

– Мӗн хăрамалли пур унтан? Хутран ҫыпăҫтарса тунă, шала лапмочка лартнă. Атя, тухар та Ритăна хăйне тӗпсакайне хупса хурар! – ура ҫине тăчӗ Ванюк.

Таппа лекнӗ ҫветкесем йăраланса тухрӗҫ кăна, вӗсене пӗҫҫин-каҫҫин ярса та тытрӗҫ. Ҫутă ҫутман пулсан та ăнланчӗҫ джентельменсем: пӳрт тулли хӗрача пуҫтарăннă Ритăсем патне. Аслăраххисем, Ванюкпа Ҫерушран вăйлăрах кăна мар, вӗсене нимӗн вырăнне хуманнисем кунта! Хăрушăран хăрушă чăкармисене хăш самантра ҫыхса тăлласа та пăрахрӗҫ. Вут пуленкисенчен те лăпкăнрах-йăвашрах кăмăлпа йăваланса выртрӗҫ телейсӗр тискерӗшсем урайӗнче.

Тинех ҫутă ҫутса ячӗҫ. Ванюк умӗнче пуҫӗпе маччана ҫапса шăтарасла Амазонка Люда каҫăрăлса тăрать. Ритăпа унăн тусӗ Нина та кунтах – хи-хиклетсе чыхăнса вилес патнех ҫитнӗ. Тепӗр виҫӗ хӗрне палламасть Ванюк. Тем ҫӳллӗшкерсем, тӳрех паллă – вăй-халӗсемпе Шупашкарти промышленноҫ тракторӗсенчен кая мар, тимӗр улăпсемпе ал вӗҫҫӗн нимӗн те мар вăй виҫме пултараҫҫӗ. Амазонка Людăн юлташ-спортсменкисем ӗнтӗ: Пурăшкассинче – самбо кӗрешӳҫисен пӗчӗк десанчӗ! Мӗнле чухласа илеймен джентльменсем Рита засада йӗркелеме пултарнине. Ыран Михалыванч шкулта самбо турнирне ирттерет. Кӗрешӳ ăмăртăвӗн тӳрисем апла ку хӗрсем.

– Патша чысне кăтартас арҫурисене, – каларӗ тусӗсене Люда. – Урама ал вӗҫҫӗн йăтса тухас.

Хӗрсем джентльменсене ури-пуҫӗнчен ҫӗклерӗҫ, пӳртре «Ҫӗнӗ ҫул! Ҫӗнӗ ҫул!» юрă янăраса кайрӗ. Чăкармисене тула йăтса тухсан – урамра вӗсене Пурăшкасси шкулӗн 8-мӗш класӗ алă ҫупса, ура! кăшкăрса кӗтсе илчӗ. Нимӗнле ӗҫрен нихăҫан ӳркенмен Рита хӗр пӗрчи пуҫӗпех ҫветтуя тухать пуль: ытлашшипех тăрăшуллă староста юратнă класне каникулта та, каҫпа та канăҫ кăтартмасть – пурне те килӗ умне пуҫтарнă. Шурă кӗпесем тăхăнса килмен хăйсем – ҫветкелле тумланнă! Ҫыхнă кантрасене салтрӗҫ те хӗрсем Ванюкпа Ҫеруша йăвалантарсах пичӗсене юрпа ҫурӗҫ.

– Арҫурисем тесе кусене! Пăхăр-ха, Холмспа Ватсон иккен! Ҫветкене тухнă! Пире чӗнмен те! – караул кăшкăрнăн тӗлӗнчӗ Амазонка Люда. – Пӗрле илсе каятăр-и? – ыйтрӗ вăл пуҫне тăхăннă хура чăлхисене хывса пичӗсене юрпа ҫуса тăна кӗртнӗ, тискерӗшрен этем картне лартнă джентльменсенчен.

– Каларăн та... – мăкăртатрӗ Ҫеруш.

– Эсир те пыратăр-и? – кăсăкланса кайрӗ Ванюк.

– Юлмастпăр! Ҫынран мӗнрен кая? Сирӗнни пек хут купăспа Вăрманкассине ҫитсе килме намăс мар – кӳршӗ ял халăхӗ те тӗлӗнтӗр!

– Кайрăмăр! Ур-ра! Ҫырма урлă каҫса килесси мӗн вăл! – кăшкăрса ячӗҫ урамра кӗпӗрленнӗ 8-мӗш класс ачисем.

Пурăшкассине тутлăн ҫывăрса кайма чăрмантаракан сас-хура мӗн амакран сиксе тухнине тӗрӗслесе тӗпчеме Михалыванч та персе ҫитрӗ. Амазонка Людăна курсан ыталасах илчӗ пикене, мӗншӗн ҫула май хăнана кӗрсе тухман тесе те ыйтрӗ. Лешӗ юлташ хӗрӗсемпе паллаштарчӗ: «Тăваттăн тан та эпир, ҫавăнпа ытла чăрмантарас темерӗмӗр сире», – тесе ăнлантарчӗ.

Пурăшкасси шкулӗн директорӗ Михалыванч хăй, хавхаланса та ыранхи турнира аса илтерсе, кӳршӗри Вăрманкассине ҫветкене кайса килме пилленӗ хыҫҫăн йышне кура мар шавлă ҫар кӳршӗ яла ҫул тытрӗ.



Вăрманкасси урамӗпе янрашса пырса ял клубне кӗчӗ ҫветке халăхӗ. Унта урăм-сурăм ташласа юрланă хыҫҫăн – Ҫеруш хут купăсех мӗне тăрать! – Амазонка Людăпа хăна хӗрсем ертсе пыракан ҫар каялла ҫула тухрӗ. Вăрманкассисем урама тухса канихвет-пӗремӗкпе сăйларӗҫ ачасене. Кучченеҫсем Ванюкăн куланай хутаҫҫине кӗми пулчӗҫ – туп-тулли. Рита, этемлӗх умӗнчи яваплăхне тӗлӗкре те манакан марскер, юрать сых ятне пысăк михӗ чиксе тухнă! Ҫул ҫинче тӗл пулнă темиҫе йӗкӗте кӗрешӳҫӗ пикесем юр ҫине вырттарсах йăвалантарчӗҫ. Яла ҫитсен Пурăшкасси клубне те кӗрсе тухас терӗҫ Кивӗ Ҫӗнӗ ҫул уявлакансем – унта та пӗр ăстрăм качакалла транкки-транкки ташларӗҫ.

– Халӗ вара канихвет-пӗремӗкпе чей ӗҫме пурте пирӗн пата! – командирла хушрӗ Амазонка Люда.

Ритăсем патнелле шавласа-кӗрлесе сиккеленӗ май ятарласа хăнана чӗнекенсен пӳрчӗсене те кӗрсе тухрӗҫ туя кайма тухнă катемпин уяв тумне тăхăннă ачасем. Кучченеҫ айнех пулчӗ ҫветке ҫарӗ – туслă та хастар 8-мӗш класс! Ритăсем патӗнче хӗр ачасем пуҫтарнă кучченеҫсенчен Кивӗ Ҫӗнӗ ҫул сӗтелӗ хатӗрлеме тытăнчӗҫ. Пурте вырнаҫччăр тесе арҫын ачасем кӳршӗсенчен саксем те илсе каҫрӗҫ. Чей ӗҫме витрипех шыв вӗретме лартрӗҫ. Мухтава тивӗҫлӗ класс старости Холмспа Ватсона улталаман иккен – чăнахах та магазинран пылак ҫимӗҫ илсе килнӗ.

– Хăрушă та тискер икӗ чăкарми шăнкăравласанах часрах лавккана чупрăм – малалла пурнас, ыранхи куна кӗтсе илес килчӗ! – пӗлтерчӗ ыттисене Рита. – Халӗ пурин умӗнче хырçă тӳлетӗп – свидетельсем пӳрт тулли! – тыттарчӗ вăл Ванюкпа Ҫеруша пӗрер пакет.

Джентльменсем кăххăм-кăххăм текелесе куланай ҫимӗҫӗсене сӗтел ҫинчи турилккесене хучӗҫ.

– Эпӗ шăнкăравланă чух эсир Шупашкартан килнӗччӗ-и вара? – ыйтрӗ Ванюк Амазонка Людăран.

– Какшӗ! Шăпах пӳрте кӗнӗ кăначчӗ. «Ку ачасем каҫпа пирӗн пата килмесен – хамăр каятпăр!» – тесе тӗв турăмăр вара. Рита ачасене пӗлтерсе тухрӗ, калаҫса татăлчӗ. Эсир ҫитиччен пуҫтарăнчӗҫ 8-мӗш классем. Разведка икӗ арҫури ҫветкене тухни ҫинчен хыпар ҫитерсенех – картишне кӗрсе пытанса ларчӗҫ.

– Хамăр класс те вăл ачасене. Никама та шанма ҫук иккен.

– Кивӗ Ҫӗнӗ ҫул ячӗпе пурне те! Чăваш Республикинчи, Атăлҫири, тен, тӗнчипе те чи хăрушă та тискер икӗ чăкармине маччана ҫити ывăтас! Вӗсем пулмасан – паян уяв тăваймастăмăр та!

Пӗкке авса ҫурмалла шарт хуҫма пултаракан кӗрешӳҫӗ пикесем малтан Ванюка, кайран Ҫеруша ҫӳлелле, маччана лектерсех, ывăтрӗҫ. Вара ҫветке халăхӗ Кивӗ Ҫӗнӗ ҫул сӗтелӗ хушшине ларчӗ.

# Хурçă урхамах

**Каçхи çул пушах! Епле аван: газ пусма кăна ан хăра. Мĕнле йышши вирхĕнет машина. Кăмăла итлесе мĕсĕрех ура акселератора пуснăçем пусать. Спидометр ташша тухрĕ, цифрăсем ўсме пикенчĕç: 60, 90, 120, 150, 180, 210!.. Акă вăл – адреналин: чĕре халь-халь сиксе тухас пек тапать. Аслă çул патши евĕр туян хăвна. Никам та сана тытса чараймасть! Япалан йĕрки пур, ирĕксĕрех тормоза пусма тивет. Машина самолет мар – шел. Спидометр йĕппи майĕпен чакма пуçларĕ: 180, 120, 90, 60, 30. Светофору-качкуна пăхмасăрах каллех газа пусас килет, анчах юрамасть. Çапла шухăшласа ларнă çĕрте çумранах мотоцикл вăш! çеç вĕçсе иртсе кайрĕ... Пур-ха Чăваш Енре те хиври йĕкĕтсем!**

Манăн юлташсем пурте тенĕ пекех çăмăл машинăпа çил ачисемпе ăмăртаççĕ. Маларах вĕсем мотоциклпа е мопедпа кăсăкланатчĕç, байкерсем пекех çўретчĕç. Хĕрсене савăнсах ярăнтаратчĕç. Кайран вара водитель прависене илчĕç те машина рульне тытрĕç. Мĕншĕн мотоциклтан сивĕнчĕç? Нивушлĕ вăл çăмăл машинăран начартарах?

Çакна пĕлес тесе эпĕ тĕрлĕ çулхи юлташсемпе калаçрăм, шухăшĕсемпе паллашрăм – тен, йăлăхтарсах çитертĕм. Тĕпчев пĕтĕмлетĕвĕсене халăх умне кăлариччен малтан хамăн шухăша палăртса хăварас. Поэт калашле, эп пĕччен мар, эп хам пин çын! Маншăн мотоцикл та, çăмăл машина та – пĕр япалах. Вĕсене лаша урапипе пăтраштармастăп. Вут чĕреллĕ утсемпе кирлĕ çĕре хăш вăхăтра та таçта та кайса килме пулать. Çăмăл машинăпа лайăхрах ĕнтĕ: багаж илме меллĕ, çул çинче сывăрса пыма та пулать. Хăрушсăрлăх çаккисем пур, вĕсен уссине вара статистика çирĕплетет. Тепĕр пысăк ырлăх – хĕлле машинăра ăшă та хăтлă. Сăпкари пек. Шухăша пĕлтертĕм, халĕ – тĕпчев нушине тўснисене сăмах.

**Николай Петров:**

– Манăн çăмăл машина та, мотоцикл та çук-ха хальлĕхе. Çывăх вăхăтра мопед илесшĕн. Мĕншĕн тесен вăл велосипедăн тăванех, чупма çăмăл, хăрушла хăнăху кирлĕ мар. Хĕрсем те нимĕн те мар вĕçтерсе çўреме пултараççĕ мотоцикл «чĕппипе». Унсăр пуçне мопед валли права та кирлĕ мар. Паллах, хĕлле пит шик! шăхăрсах çўреймĕн: çил витĕр касать. Çулла вара чупма питĕ аван. Килне çитме васкакан хĕрсене те хăвăрт çеç кайса леçме пулать. Киле вăхăтра çитекен пикесене вара ашшĕ-амăшĕ ятламасть, тепĕр кун урама тухма та чармасть. Пылчăкра мопед чăн-чăн танк пекех: ниçта та путса лармасть.

**Денис Васильев:**

– Маншăн вара çăмăл машина лайăхрах. Атте мана пĕчĕк чухнех руль умне лартнă, автомобильпе чупма вĕрентнĕ. Мотоцикл та пулнă килте, анчах ун çине сайра хутра ларнă: çăмăл машина пăр ăстрăм йăлăхтарса çитерсен çеç. Икĕ-виçĕ кун çўретĕп те мотоциклпа – каллех машина рульне тытатăп.

**Сергей Федоров:**

– Мотоциклпа эпир çамрăкрах чухне шутсăр чупаттăмăрччĕ. 9-10-мĕш классенче вĕреннĕ чух шăл çеммиччĕ вăл: 5-6-ăн хăпарса лараттăмăрччĕ те çĕрĕпех хăваласа çўреттĕмĕр. Хĕллехи сивĕсене те пăхса тăман, кювета мĕн чухлĕ вĕçмен-ши! Шкула та мотоциклпах каяттăмăрччĕ. 11-мĕш класра вара икĕ урапаллă тусран сивĕнтĕм. Юрату вĕçленчĕ – çăмăл машинăпа чупма вĕрентĕм. Правасем илсен мотоцикл пирки мансах кайрăм. Халĕ вара ун çине çаврăнса та пăхас килмест. Машинăпа пин хут лайăхрах! Вăл мотоциклтан шанчăклăрах, унпа çўреме хăрамастăн. Автомобиле туйса тăратăн, ăçта мĕн ĕçлемест – тўрех пĕлетĕн. Мотоцикл вара ун пек мар.

**Дмитрий Емельянов:**

– Мана мотоцикл хăйĕн хăвăртлăхĕпе тата халсарĕпе (мощность) питĕ кăмăла каять. Тимĕр урхамах! Çапах та хальхи пурнăçра çăмăл машина усăллăрах. Урамра çумăр çăвать – санăн вара пĕр çĕре каймалла. Паллах, мотоциклпа тухсан – йĕпенсе пĕтен. Машинăшăн начар çанталăк çук. Унсăр пуçне багажник пур. Пĕр-ик михĕ çĕр улми хуратăн та – лăпкăн çеç хулана ухатăн. Ларса пыма та питĕ мĕллĕ, креслине хăвна кирлĕ пек хăпартма пулать. Автомобильте ăшă, кирлĕ пулсан – çавăнтах сывăрма юрать. Тата магнитола пур машинăра: ку вара кирек мĕнле вăхăтра та питĕ кирлĕ атрибут.

Шел, байкер пулсах çуралнă каччăсене тупаймарăм эпĕ. Çавăнпа каçарăр, икĕ кустăрмаллă урхамаха чысланă гимнăн сăмахĕсене те, кĕввине те каласа параймастăп. Мотоцикл – чи шанчăклă тус текенсем сахал мар тĕнчере. Çапах та ытларах çамрăк çынсем машинăна килĕштереççĕ. Хуçисем автомобилĕсене хăйсен ачисене юратнă пекех саваççĕ. Вĕсем техникăпа пĕр чĕлхе тупса калаçма та пĕлеççĕ, пĕр-пĕрне ăнланаççĕ! Тимĕр юлташ вансан вара тухтăр пекех сыватма васкаççĕ.

Анчах нихăçан та манса каймалла мар: мотоцикл-машинăпа тирпейлĕ çўремелле, правилăсене çирĕп пăхăнмалла. Ытлашши хăвалани инкек патне те çитерет. Çавăнпа ручка илĕр те статья пуçламăшне тўрлетĕр – кăштах тĕрĕс мар çырман-и эпĕ?

**Неонила ПЕТРОВА**







# Салам, хаклă тантăшсем!

Шупашкар районĕнчи Ишек шкулĕнче вĕренекенсем тантăшĕсене, «Самант» тусĕсене çыру çырас, кăштах хăйсемпе паллаштарас терĕç.

**Эпĕ – Татьяна Карманеева.** 10-мĕш класра вĕренетĕп. Пирĕн класра малтан 16 ача вĕренетчĕ, 10-мĕшне вара 6-шĕ çеç килчĕç. Сахалтарах йышпа вĕренме лайăхрах та: никам та чăрмантармасть, шавламасть. Физкультура урокĕнче çеç япăх: волейболла выляма çын çитмест! 1-мĕш класран пуçласа паянччен пирĕн класс – шкулта чи тусли. Кĕçĕн класра вĕрентнĕ Лилия Геннадьевна Александрова тата класс ертÿçи Петр Михайлович Романов тÿпи шутсăр пысăк çакăнта. Вĕсем – пирĕн туслăх управçисем. Класĕпех тав тăватпăр юратнă вĕрентекенсене.

Тăван шкулта мана питĕ килĕшет. Мĕнле кăна мероприяти ирттерместпĕр пуль эпир, хамăра та интереслĕ, учительсем те кăмăллă. Иккĕмĕш кил кунран-кун илемленсех пырать. Классенче пластик чÿречесем, вĕсене илемлĕ тюль карнă, алăксем те çĕннисем. Шкулти чечек тĕнчи яланах сип-симĕс.



Кашни çулах хавхалансах олимпиадăсене хутшăнатăп. Иртнĕ вĕренÿ çулĕнче районта ОБЖ предмечĕпе 2-мĕш вырăна тивĕçрĕм. Пытармастăп: питĕ хĕпĕртерĕм. Вăхăт тупăнсан пылак, тутлă çимĕç пĕçерме юрататăп. Килтисене, юлташсене сăйласа савăнтаратăп. Манăн юратнă кĕнеке – Вениамин Каверинăн «Икĕ капитанĕ». Ăна пуç çĕклемесĕр вуласа тухрăм, халĕ те уйрăлмастăп унпа. Питĕ интереслĕ. «Самант» тусĕсене ăна вулама пурне те сĕнетĕп. Юратнă фильм – «1+1» камит. Ăна эпир аттепе иккĕн пăхма кăмăллатпăр. Чăваш эстрадинче Лида Одинцова юррисем килĕшеççĕ. Сасси те кăмăла каять – хитре.

**Эпĕ – Анастасия Тарасова.** Татьянăпа пĕр класра вĕренетĕп. Пирĕн класс чăнах та чи тусли. Яланах пĕр-пĕрне пулăшма тăрăшатпăр. Вĕрентекенсене атте-анне вырăннех хуратпăр. Вулама-çырма хăнăхтарнă Лилия Геннадьевнăна тата класс ертÿçине, пире аслă çула тухма хатĕрлекен Петр Михайловича уйрăмах тав тăвас килет.

Тăван шкулта вĕренме мана питĕ килĕшет. Мероприятисем ирттересси, концерт лартасси мĕнле кăмăла каять. Юрлама ачаран пултаратăп, ташлама та тарават. Ташă – манăн чун киленĕвĕ. Ташă кружокне 1-мĕш класранпах çÿретĕп. Инди, тутар, чăваш, вырăс ташшисене çавăрттаратăп, хальхисене пĕлетĕп. Юнашар ялсене те тухса çÿретпĕр концертпа.

Пирĕн класс ытарлă-ударлă ушкăн: олимпиадăсене туслăн хутшăнатпăр. Хам та ăмăртусенче малти вырăнсене çĕнсе илнĕ. Спорт тĕсĕсенчен маншăн чăн малта волейбол. Уроксем хыççăн та спортзалта пуçтарăнса вылятпăр. Кÿршĕ шкулсен командисемпе вăй виçетпĕр. Эпĕ вăрçă вăхăтне сăнарлакан фильмсем пăхма кăмăллатăп. Ĕлĕкхи кинона юрататăп. Тăван халăх пултарулăхĕнче маншăн чи малкайăи – тĕрĕ-эреш, юрă-ташă.

**Эпĕ – Ирина Иванова.** 15-ри хĕр. 10-мĕш класра вĕренетĕп. Шкул пурнăçĕнче чи килĕшекенни маншăн – спорт. Пирĕн хĕрсем пурте волейболпа «чирлĕ», эпĕ те çынран кая мар. Чупассипе те çитĕнÿсем пур. Кашни çулах шкулта С.К.Скворцова халалланă кросс ирттереççĕ. Унта малти вырăна тухасси маншăн йăлана кĕчĕ пуль. Наци кросĕн районти ăмăртăвĕнче те 3-мĕш вырăна тивĕçрĕм пĕлтĕр.

Тăххăр пĕтерсен пирĕн класран 10 ача тухса кайрĕ, вăтам шкула урăх майсемпе пĕтерме шут тытрĕ. Улттăн кăна юлтăмăр эпир. Тунсăхлатăп вĕсемшĕн, манăçа тухмаççĕ юлташсем. Тăхăр çул пĕрле вĕреннĕ, интереслĕ мĕн чухлĕ самант курнă-тÿснĕ! Халĕ ултă ача çеç юлни вĕренÿ енчен лайăх та пуль. Вĕрентекен пиртен, сахал йышран, кашни урокра нумай ыйтать. Пĕлтĕрхи тулли класа аса илетĕп те чуна тунсăх пусать, вĕсемсĕр кичем.

Класс ертÿçи пирки те кăштах калас килет. Петр Михайлович пирĕн шкулта 1984 çултанпах ĕçлет. Истори, обществознани, чăваш чĕлхипе литературине вĕрентет. Чăваш патшалăх университетĕнче 3 специальность алла илнĕ вăл. Шкулти пур вĕрентекен те чунне парса ĕçлет, пирĕншĕн тăрăшать. Вĕсене хисеплетпĕр эпир, тав тăватпăр.

Халăх юрри-кĕвви çеç мар, чăваш эстради те кăмăла каfive. Кĕçĕн класра пĕрле вĕреннĕ Лида Одинцова юррисем ытларах килĕшеççĕ. Андрей Шадриков пултарулăхĕ кăмăллă – унăн юррисем илемлĕ.

**Сăн ÿкерчĕкре: сулахайран сылтăмалла – Таня, Настя, Ирина.**


© «Самант»

Аслă классенче вĕренекенсемпе çамрăксен журналĕ

*ИНДЕКС*
*73208 (республикăра)*
*11467 (республика тулашĕнче)*

1929-1991 çулсенче «Хатĕр пул!», 2003 çулччен «Çилçунат» ятсемпе тухнă

1 (664) № 2014 ç.

*УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ:*
Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви

Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерствин «Хыпар» Издательство çурчĕ» Чăваш Республикин автономи учрежденийĕ

Директор-тĕп редактор - **А.ЛЕОНТЬЕВ.**

Яваплă редактор - **В. СТЕПАНОВ.**

Компьютер дизайнĕ - **Ф.ЧЕРНОВ.**

Пирĕн сайт: **www.hypar.ru**

Электрон адрес: **tantas@list.ru**

Пирĕн адрес: 428019, Шупашкар хули, Иван Яковлев пр.,13, Пичет çурчĕ, «Хыпар» Издательство çурчĕ

Телефонсем:
**28-83-89**
**56-00-67**

Федерацин çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникацисен сферинчи надзор службин Чăваш Республикинчи управленийĕ (Роскомнадзор) 2013 çулхи раштав уйăхĕн 12-мĕшĕнче ПИ ТУ 21-00311 № регистрациленĕ.

Хакĕ ирĕклĕ.

Журнала редакцире калăпланă, «Чувашия» ИПК» ПУП (И. Яковлев пр.,13) пичетленĕ.

Пичете алă пуснă: 20.01.14.
Пичетленĕ: 28.01.14.

Хут формачĕ 60х84 1\8
Усл. п. л. 4,0.
Тираж 1400 экз.
Заказ № К-69





1 №

**Диана СМИРНОВА**

Кролик ҫулӗнче ҫуралнӑ, гороскоппа – Йӗкӗреш. Кӑмӑллакан тӗс – симӗс, кӗл чечек юратать. Чун канӑҫӗ – шахмат вӑййи. Тӗрлеме-ҫыхма ӑста, уяв сӗтелӗ хатӗрлессипе те пултарулла. Шанчӑклӑ, ырӑ кӑмӑллӑ, тӑрӑшуллӑ, тӗллевлӗ ҫынсене хаклать. Юратнӑ кӗнеке – «Нарспи».



2 №

**Анна СЕРЕБРЯКОВА**

Кролик ҫулӗнче ҫуралнӑ, гороскоппа – Йӗкӗреш. Тӗнчере чи хитре чечек – лили. Юратнӑ тӗс – ҫутӑ кӑвак. Чун киленӗвӗ – ҫуллӑ сӑрӑсемпе ӳкересси. Тантӑшӗсенче ырӑ кӑмӑллӑхпа чун ҫирӗплӗхне, кӑмӑл вӑйне, тӑрӑшулӑха мала хурать. Килӗшекен хайлав – «Ӗмӗр сакки сарлака». Юратнӑ юрӑҫсем – Сергей Кувшинов тата Ирина Шинжаева.

